..., Сти
... ки. Горького
0

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ÇЕНТАБЕР 20
ЫТЛАРИКУН
217 (5030) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать | ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ | Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—97, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йалхуçалăх пайĕн—4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн—6—23.

ПСК(б)П историне тарăнăн вĕренмеле тăвас пулать

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) парти историйĕн Кĕске курсĕ мĕн пур коммуниссен, партире тăман мĕн пур большевиксен тимлĕхне хăйĕн çине пăхтарать. Çак сталинла пысăк ăслăлăхлă ĕçре чи малта пыракан, чи революцилĕ парти строительствин опытне пĕр çĕре пĕтĕçтернĕ, кунта большевисăмăн аслăран та аслă идейăлă пуйанлăхне пухнă. ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне тарăнăн вĕренни партийе идейăлă хăватлă хĕçпăшалпа авăрлантарать, пирĕн парти кадрĕсем теори йенĕпе вăйсăррине пĕтерме пулăшать. Пирĕн умра халĕхи вăхăтра пĕтĕм çулĕшĕпех çакăн пек задачă тăрать: ПĔТĔМ ПАРТИНЕ ПСК(б)П ИСТОРИНЕ ВĔРЕНМЕ ЙАВАÇТАРМАЛА.

Çак ĕç пысăк та ответлă, вăл ĕç васканине тата шавланине тӳсме пултараймасть, вăл ĕç ВĔÇНЕ ÇИТИЙЕХ ЙĔРКЕЛĔ ПУЛМА, ТĔПЛĔН ХАТĔРЛЕНМЕ ТАТА ПЫСĂК ОРГАНИЗАЦИЛĔХЛĔ ПУЛМА хушать. Ăнланас пулать: кунта йаланхи пек пĕр-пĕр паллă та кĕске срукла кампанисем çинчен мар, план тăрăх, тарăнăн ВĔРЕНЕССИ çинчен сăмах пырать. Хыпаланса ӳкни, парадсенчи пек тĕрлĕрен шав туни çакăн пек ĕçре сийен çеç кӳме пултараççĕ. Вĕсем пурпĕрех çийелтен çеç шăйăрттарса кайасси патне илсе пыраççĕ, вара тĕллев патне çитме пулмасть. Большевикла пропагандăн вăйĕ ака мĕнре тăрать: вăл ыйтăвăн ăшчикне вĕçне çитийех уçса парать, йавленисене тарăнăн анализ тăвать, вĕсен çыхăнăвĕсене вĕрентет, çынсене ĕнентерсе йертсе пырать. Çавăн пек майпа çеç пирĕн партилĕ кадрсене вĕрентсе ӳстерме тата вĕсене идеологи йенчен пиçĕхтерме пулать.

Çав хушăрах парти организацисем ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне вĕренес ĕç çине васкаса, тимлĕ мар пăхнă тĕслĕхсем те сахал мар. Чылай вырăнсенче руководительсем парти историне вĕренме мĕнрен пуçламали çинчен, çакна валли мĕнле ĕçсем туса иртерме кирли çинчен шухăшламан, тата хăйсен умне ТĔП ыйтăва лартман: ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне ТАРĂНĂН вĕренме тытăнас пулсан, ХАТĔРЛЕНӲ ЙЕНĔПЕ мĕнле ĕç туса иртермеле? Çакăн вырăнне вĕсем хыпаланса ӳксе, васкавлă йĕркепех мĕнпур (обйазательнă мĕнпур!) кружоксен пĕрремĕш занятийĕсене иртерме палăртаççĕ.

Çакăн пек васканинчен тĕрĕс мар ре решенисем тухса тăнă. Парти историне вĕренессине хăшпĕр çĕрте кирлĕ пек ăнлантармасăрах, слушательсене хăйсене материалпа тĕплĕн паллашма памасăрах, кăнтăрлахи перерывсем вăхăтĕнче массăлăн вуланипе çеç иртерсе йарасси патне çитнĕ. Çав вăхăтрах пуриншĕн те паллă— учебникăн кашни сыпăкĕ, уйрăмах тăваттăмĕш сыпăк—марксисăм-ленинисăм философине, большевикла партин теорилĕ никĕсĕсене çутатса паракан сыпăк—хатĕрленме, алла кăранташ тытса тĕплĕн сӳтсе-йавса вĕренме хушать, мĕншĕн тесен Кĕске курсăн кашни формулировкине теорилĕ тата политикăлă калама çук пуйан содержани кĕртнĕ. Тавçăрса илме пултараймăн руководительсем çакăн çинчен шухăшласа пăхасшăн мар, вара большевикла пропагандă интересĕсене сийен кӳреççĕ.

Парти вĕренӳ кружокĕсен ĕçĕнче те васкани палăрать. „Правда" хаçатра учебникăн черетлĕ сыпăкĕ пичетленсе тухсанах, çийĕнчех ăна „вĕренме" ларнă, виççĕмĕш сыпăкĕнче мĕн çинчен каланине пĕлмесĕр, пĕтĕм курс çинчен çителĕклĕ тарăн чухламасăр пĕрремĕшпе иккĕмĕш сыпăксене вуланă.

Малтанхипе иккĕмĕш хутĕнче те парторганизацисем йенчен хатĕрленӳ ĕçĕ пулманни, кирлĕрен те кирлĕ ыйтăва кампанин йĕркипе „сарса йама" тăрăшни палăрать.

ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне тарăнăн вĕренес ĕçе хатĕрленме мĕнрен тытăнмала-ха? ПРОПАГАНДИССЕМ ХАТĔРЛЕНИНЧЕН ТЫТĂНАС ПУЛАТЬ. Çак вăл тĕп, чи кирлĕ ыйту, ăна татса памасăр, ытти ыйтусене те татса пама пулмасть.

ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ большевикла партин мĕнпур гигантла историлĕ опытне теори йенчен пĕтĕçтерсе тухать, вăл рабочи класпа унăн партийĕн революцилĕ кĕрешĕвĕнчи чи кăткăс тапхăрĕсене чăннипех ăслăлăхла, марксисла ăнлантарса парать. Çак ăслăлăхлă ĕçри аслă шухăшăн пĕтĕм тарăнăшне ăнланса илес пулать, вăл ĕç тăрăх коммуниссене кĕрешмели тата çĕнтерӳ тумали большевикла искусствăна вĕрентес пулать. Пропагандиссен кадрĕсем, парти членĕсене политикăлă воспитани пама шаннă пропагандиссем, ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн кашни сăмахне вĕренекенсем патне çитерме тивĕçлĕ пропагандиссем калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрасси паллă мар-и вара?!

Парти çĕнĕ, пысăк ĕçе тытăнать, ку ĕç патне кивĕ виçепе пыма йурамасть. Паллах ĕнтĕ, пирĕн пропагандиссен вĕренекенсем патне пырасчен малтан хăйсен чылай хатĕрленмеле. Парти организацийĕ, унăн руководительсем занятисем иртерме чи вăйлă пропагандиссене пухсан, çынсемпе калаçсан, сиксе тухакан ыйтусене пурне те ăнлантарса парсан,

ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕнчи ÇĔНĔРЕН мĕн пуррине ăнлантарсан тата пропагандиссемпе ТĂТĂШАХ ĕçлесен анчах парти организацийĕ ĕçре ăнăçлăх тума пултарать. Çавăн пек хатĕрленнĕ чи квалификацилĕрех пропагандиссен пысăк мар ушкăнĕ пропагандиссен тепĕр, йышлăрах ушкăнне пулăшма пултарать, çапла вара, пирĕн пропагандиссен кадрĕсем занятисем иртернĕ хушăрах хăйсем те вĕренсе пыраççĕ. Пропагандиссем хăйсем малтан хатĕрленни, вĕсем пĕрмайах вĕренсе пыни—парти вĕренӳвĕнче ăнăçу тумали чи обйазательнă условин пулать.

Парти ĕçĕнчи йертсе пыракан работниксен, обком, хула комитечĕсемпе райком çекретарĕсен пропагандăна организацилес тата пропагандиссене суйласа тупас ĕçе хăйсен аллине илес пулать. Чи кирли кунта ака мĕнре пулать: парти ĕçĕнчи йертсе пыракан работниксем—парти комитечĕсен çекретарĕсемпе членĕсем чи малтан хăйсем пропагандиссем пулччăр. Пропагандиссен составне парти ĕçĕнчи йертсе пыракан работниксене кĕртес пулать. Çакăн пек туни ĕçе тĕрĕс организацилеме май парать, пирĕн парти ĕçĕнчи йертсе пыракан кадрсене теори йенчен вĕрентсе хатĕрлеме пулăшать.

Кружоксенче çитес вăхăтра пулмали занятисенче ăнăçлăн вĕренмели тĕп услови вăл—ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн сыпăкĕсене малтан УЙРĂМĂН ВУЛАНИ пулса тăрать. Кашни коммуниса учебникăн пичетленсе тухнă страницисене тĕплĕн вуласа тухма тата мĕн вуланине лайăх ăнланса илме май тупса памала. Вĕренекенсене Кĕске курспа тĕплĕн паллаштарсан тин кружоксенче ăнăçлăн, тарăнăн ĕçлесси çинчен калама пулать. Çынсем материал пирки шухăшламасăрах, мĕн вуланине ăнланмасăрах кружок занятийĕсене пыраççĕ пулсан тата, пĕр темăна кирлĕ пек вĕренсе пĕтермесĕрех, пушар чухнехи пек васкаса тепĕр темă çине куçаççĕ пулсан,—çакна ĕнтĕ каштах та пулин йĕркелĕ тесе йышăнма пулать-и-ха? Нимĕн те çакăн пек васкама хушмасть тата çапла васканине нимĕнпе те тӳрре кăларма çук.

ПСК(б)П ИСТОРИНЕ ТАРĂНĂН ВĔРЕНЕССИ КĔСКЕ КУРС УЙРĂМ КĔНЕКЕ ПУЛСА ТУХНĂ ХЫÇÇĂН ПУÇЛАНАТЬ. УНЧУХНЕ ВАРА ПАРТИЛĔ ВĔРЕНӲ КРУЖОКĔСЕН ЧĂННИПЕХ ĔÇЛЕМЕ ПУÇЛАМАЛА. ХАЛЬХИ ВĂХĂТРА УНЧЧЕН ПРОПАГАНДИССЕМ ХАТĔРЛЕС ПУЛАТЬ ТАТА КОММУНИССЕНЕ КĔСКЕ КУРСПА МАЛТАНЛĂХА ПАЛЛАШТАРАС ПУЛАТЬ.

ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне вĕренни пĕтĕм пропагандă ĕçне çӳлĕ пусăма хăпартать. Парти активне, мĕнпур коммуниссене Кĕске курс çав тери пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен, çирĕп большевиксем вĕрентсе ӳстерес ĕçре вăл калама çук пахă вырăн йышăнни çинчен ăнлантарса памала. Преподавани ĕçĕнчи чи пĕчĕк пăсăксемпе те, пропагандă ĕçĕ çине тимсĕр пăхнипе татăклăн кĕрешмеле.

Партин хаклăран та хаклă, чĕрĕ ĕçне формальнă ĕç туса хума чейеленекен тăрлавсăр етемсем пирĕн халь те пур-ха. Çапла, сăмахран, Украинăри Коммуниссен (большевиксен) партин Кийĕв хула комитечĕн пропагандă пайĕн заведуйушчийĕ Остапенко йулташ хулари пропагандиссене çакăн пек „установкă" панă: партилĕ шкулсем пилĕк темĕ вĕреннĕ пулсан, вĕсем вара ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне кивĕ программă тăрăх йулнă темăсемпе çеç вĕренеççĕ,—тенĕ. Украинăри Коммуниссен (большевиксен) партин Макейĕвск хула комитечĕн çекретарĕ Коренев йулташ та çавăн пек кăтартăвах панă, вăл кивĕ учебник программи тăрăх тăватă темă çеç вĕренсе пĕтерне шкулсенче кăна ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне вĕренме пуçлама хушнă. Çиччĕмĕшпе саккăрмĕш темăсене вĕренсе пĕтернĕ шкулсене илес пулсан, вара Коренев йулташ панă установкă тăрăх вĕсен малтанхи пилĕк сыпăка вĕренмеле мар иккен, вĕсем черетлĕ темă хыççăнхи тивĕçлĕ сыпăкран вĕренме пуçлаççĕ.

Çавнашкал „пуçарусен" йăнăшне ăнлантарса парасси парти организацисен обйазаннăçĕ пулса тăрать. ПСК(б)П историне вĕренес тĕлĕшпе ĕçлекен парти шкулĕсемпе кружокĕсен пурин те ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне йăлтах тата пĕтĕмпех вĕренмеле.

Çавăн пекех тата тепĕр йăнăш çинчен те асăрхаттарас пулать. ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне вĕренме икĕ уйăх йе виçĕ уйăх срук кăтартса паракан руководительсем те тупăнаççĕ. Çавнашкал васкани сийенсĕр пуçне, нимĕн те памасть.

Парти вĕренĕвне парти историйĕн ленинла-сталинла Кĕске курсне тивĕçлĕ организацилессишĕн пĕтĕм вăйа курса тăрăшмала. Партилĕ кадрсем тарăнăн та тимлĕн вĕренмели тапхăр пуçланса кайать. Çак вăл партине татах та ытларах пиçĕхтерет, ăна татах та хăватлăрах тăвать, унăн боецĕсене марксисăмăн-ленинисăмăн никам çĕнейми хĕçпăшалĕпе авăрлантарать.

(„ПРАВДА" умстатйи, çентаберĕн 17-мĕш).

Совет Сойузĕ тăрăх

**Киравски чукунçул çинче хĕрарăм-активисткăсем хушшинче пăравус ĕçĕн техникине вĕренес йухăм анлан саралать. Машинист ĕçне вĕренме кăмăл тăвакан хĕрарăмсем çĕршерĕн шутланаççĕ. Волховстройри депо çумĕнче пăравус ĕçĕн техникине вĕренме кружок организациленĕ.

** Арктикăна кайнă пысăк вĕçевçĕ Совет Сойузĕн Геройĕ Н. Г. Головин йулташ Мускава таврăннă. Вĕçев вăхăтĕнче—августăн 8 мĕшĕнчен пуçласа—самолет йавăр условисенче 29 пин километра йахăн вĕçнĕ. Вăл Арктикăн хĕвелтухăçри çектăрĕн мĕнпур пек полярлă станцисенче пулнă.

** Çентаберĕн 18-мĕшĕнче Ташкентра, ленинла-сталинла комсомолăн 20 çул тултарнă йатпа, республикăри колхозсен пиллĕкмĕш спартакиади уçăлнă. Спартакиадăна Узбекистанри 73 районран 333 колхозник хутшăннă.

** Спортăн тава тивĕçлĕ маçтăрĕ орденоносец Серафим Знаменский (Мускав) çентаберĕн 18-мĕшĕнче пулнă спорт ăмăртăвĕнче 10 километра 31 минут та 04 çекундă хушшинче чупса тухнă. Çак результат вăл хăйех тунă Пĕтĕм Сойузри рекордран иртет.

** Каменец-Подольск, Житомир, Винница, Одесса облаçĕсенчи тата Молдави АĔС Республикĕнчи колхозсенче çак çулти нойабĕрĕн 1-мĕш тĕлне çĕнĕрен 125 мунча тăваççĕ. УССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ мунчасем тума 500 пин тенкĕ нумай срукла кивçен укça уйăрса панă.

** Мускавра В. И. Ленин йачĕпе тăракан библиотекă çуртĕнче Казахстан халăх йурăçи орденоносец Джамбул творчĕствине кăтартакан пысăк выставкă уçнă. Выставкăра поетăн ССР Сойузĕнчи халăхсен чĕлхисем çине куçарнă пур произведенийĕсене те кăтартнă.

Белги фашисĕсен айаплă ĕçĕсене тупса палăртнă

Белгири коммунисла хаçат „Вуа дю Пепель" Белги фашисĕсен айаплă ĕçĕсене палăртнă май, Белги правителствин ку ĕçе тĕрĕслесе пăхнă, тĕрĕслӳ пысăк результатсем панă. Белги столицинче—Брюссельре полици Белги фашисĕсен айаплă ĕçĕсене кăтартакан паллă документсем тупнă. Кунсăр пуçне тата Белги çарне тасатнă чухне фашиссен ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларакан питех те паллă документсем тупнă пулнă.

(ТАСС).

Мускав çар округĕн кĕркуннехи тактикăлă вĕренĕвĕсем

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран): Оборонă Халăх Комиссарĕ Совет Сойузĕн Маршалĕ К. Е. Ворошилов, Комдив Соколовски, Мускав çар округĕн командуйушчийĕ Совет Сойузĕн Маршалĕ С. М. Буденный йулташсем вĕренӳсен карттине пăхса тухаççĕ.

В. Федотов фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Мускавран Хабаровска— 20 сехет те 58 минут хушшинче

Çентаберĕн 17-мĕшĕнче Хабаровска „ПС-40" маркăлă самолет вĕçсе пынă. Пилочĕ Н. Ф. Горев йулташ. Самолет Инçет-Хĕвелтухăç крайĕнче пурăнакансем валли „Правда" хаçата 12 пин екземпляр илсе çитернĕ, вĕсенче Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Парти историйĕн сыпăкĕсене пичетленĕ.

Мускавпа Хабаровск хушшине—7.465 километра самолет 20 сехет те 58 минутра вĕçсе тухнă. Самолет 50-ран пуçласа 6 пин метр çӳлĕшĕсенче вĕçнĕ. Сехетре вăтамăн 356 километр тунă.

(ТАСС).

Шыв айĕнче çӳрекен кимĕ çинче кино кăтартаççĕ

КРОНШТАДТ, çентаберĕн 18 ш. (ТАСС). Хĕрлĕ йалавлă Балти флочĕн шыв айĕнче çӳрекен кимĕсен Н. подразделенин йулашки походĕ вăхăтĕнче, подводниксем çар ĕçĕсене вĕренмен вăхăтра кинофильмсем курнă.

Ансăр пленкăлă киноаппарата кимĕсен отçекисене лартнă пулнă. Екран вырăнне простынь пулнă.

Подводниксем шыв айĕнче „На Дальнем Востоке", „Мы из Кронштадта" тата ыт. картинăсем курнă. Шыв айĕнче çӳрекен Н. кимĕ çинче кинофильма, кимĕ тарăн шыв тĕпĕнче выртнă чухне, кăтартнă.

Кислородлă приборсемсĕр 6.000 метр çӳлĕш вĕçсе хăпарнă

Спорт самолечĕпе çӳлте вĕçни

ВОРОНĔЖ, 15. (ТАСС). Çентаберĕн 14-мĕшĕнче Воронĕж аероклубĕн аеродромĕнче „САМ-5-2-бис" спорт самолетне çӳле вĕçессипе сăнаса пăхнă.

Воронĕж аероклубĕн начальникĕ капитан Глебов, бортмеханик Бузунов йулташпа пĕрле, вĕренӳпе тренировкă тăвас майпа, кислородлă приборсемсĕр çав самолетпа çӳле вĕçсе хăпарнă. Вĕçсе хăпарнă хыççăн 55 минут иртсен приборсем самолет 6.000 метр çӳле хăпарнине кăтартнă.

ЧЕХОСЛОВАКИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

Правителствă республикăлă йĕрке туса хурать

Чехословаки правителстви хăйĕн çĕршывĕнче республикăлă йĕрке туса хурас шутпа çĕнĕрен чылай постановленисем кăларнă.

Генлейнла партине çеç мар, вăл парти йертсе пынипе ĕçлекен организацисене те йăлтах салатса йанă. Мĕнпур облаçсенчи центрсенче те генлейнла парти çурчĕсенче ухтарусем тунă. Ухтару тунă чухне тупнă материалсене пурне те конфискациленĕ, çурчĕсене пичетлесе илнĕ. Хеб хулинче генлейнăвĕçсен тĕп руководствин çуртне ухтару тунă чухне 80 пин çынăн хушамачĕсене çырса хунă списăка тупнă, вăл çынсем алла хĕçпăшал илсе путчра хутшăнмала пулнă.

Генлейнăвĕçсен комитечĕсен çурчĕсенче хĕçпăшалсем, сиктерсе йаракан йапаласем нумай тупса палăртнă. Сиктерсе йаракан йапаласене консервă банкисенче, бензин бакĕсенче усранă.

Виçĕ уйăхлăха пĕтĕм Чехословаки тăрăх чрезвычайлă йĕрке туса хунă. Сăмах, пичет ирĕклĕхне малала пĕчĕклетсе пыраççĕ. Уйрăм çынсен çырăвĕсене цензурă асăрхаса тăмала тăваççĕ. Çак ĕçсене тăвасси Германи Чехословаки çине кĕтмен хушăран тапăнас хăрушлăх ӳссе пынинчен тухса тăрать.

Правителствă тума йышăнни çоцене Чехословакири халăхăн сарлака массисем хавасăхпа кĕтсе илнĕ.

Германи Чехословакине економика тĕлĕшĕнчен вăйлăн хĕсме йышăнни çинчен пĕлтерекен сведенисене илнĕ. Егба шывĕ тăрăх таварсем турттарас тĕлĕшпе ĕçлекен пăрахут обшчĕствисем çав шыв тăрăх малашне Германирен Чехословакине çӳрес çула хупма йышăннă. Паллах, çакăн пек туни вăл Чехословакине ытти государствăсемпе суту-илӳ тăвассине йăвăрлатать, мĕншĕн тесен Чехословакири грузсен пĕр пайĕ Çурçĕр Йевропăри çĕршывсене тата Англине çав шыв çулĕпе кайать.

(ТАСС).

Чехословаки правителстви Германине йанă протест

Чехословаки правителстви Германи территоринче пурăнакан Чехословаки граждăнĕсене арĕсленине хыттăн хирĕçлесе Германи правителстви патне протест йанă. Германире арĕсленĕ Чехословаки граждăнĕсене Чехословакире арĕсленĕ генлейнăвĕçсемшĕн заложниксем тесе официадлă пĕлтернĕ.

Çакăнта пĕрлех Чехословаки правителстви генлейнла путчиссем вăйпа ирĕксĕрлесех Германи территорийĕ çине илсе кайнă жандармсемпе таможнă чиновникĕсен ушкăнне тавăн çĕршыва йама татăклăн ыйтать.

(ТАСС).

Германире генлейнăвĕçсен корпусне туса хунă

Прагă хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Германири халиччен „Судет-нимĕçсен лагерĕ" Германи командованийĕ „Судет-нимĕç корпусĕ" туса реорганизациленĕ. Вăл корпуса генлейнăвĕçсен путчне пĕтерсе тăкнă хыççăн Германие тарса пынă генлейнăвĕçсемпе тултарнă. Германие тарса пынă генлейнăвĕçсене йе „Судет-нимĕçсен корпусне" йараççĕ, йе чикĕне çирĕплетнĕ çĕрте, „рабочие роты" тенĕ çĕре ĕçлеме йараççĕ. Çав корпуса йе ротăна кĕме килĕшменнисене çийĕнчех концентрацилĕ лагĕре ăсатаççĕ.

(ТАСС).

Годжа сăмахĕ

Çентаберĕн 18-мĕшĕнче Чехословаки премйер-министрĕ Годжа Чехословакири лару-тăру çинчен радио тăрăх сăмах тухса каланă. Чехословаки халăхне чĕнсе каласа, вăл çапла паллă тунă: Чехословаки, пĕтĕм Йевропă пекех, çав тери йăвăр вăхăта пурăнса иртерет.

Чехословаки правителстви,—тесе каланă Годжа,—Йеврпăри мире хӳтлес шутпа мĕн кирлине пурне те турĕ, вăл сиксе тухма пултаракан событисемшĕн пуриншĕн те ответлă пулма пултараймасть. Малала Годжа çапла каланă: „плебисцит" тенĕскерне халĕхи вăхăтра пулса тăнă лару-тăруран тухмали йурăхлă май теме çук. Çакна Чехословакири лару-тăру çине тĕрĕс пăхакансем пурте йышăнаççĕ.

Чехословаки правителстви,—тесе каланă премйер,—Судет нимĕçĕсемпе хăйĕн хушшинчи хутшăвусене правителствăн йулашки сĕнĕвĕсем тăрăх йĕркелесе йама хатĕр. Анчах та малашнехи калаçусене Чехословаки правителстви Чехословакирен тухса тарнă Генлейнпа тата ăна пулăшаканĕсемпе мар, нимĕç халăхĕре хăйĕнпе тумала, вăл вĕсемпе калаçса татăласси çине шанать. Çакăнпа пĕрлех Годжа çапла пĕлтернĕ: словаксемпе Закарпат Украинăри халăхсем хушшинчи мĕнпур ыйтусене майласа йарасси лайăххăнах пулмала.

Йулашкинчен Годжа хăйне лăпкăн тата çирĕппĕн тытмашăн Чехословаки халăхне тавтунă тата вĕсене Чехословакишĕн чрезвычайлă вăхăтсенче малашне те çавăн пек çирĕппĕн тытма чĕннĕ. Годжа çак сăмахсемпе пĕтернĕ: „Пире тулашран мĕн тери вăйлăн хĕсĕççĕ, пирĕн пĕрлĕх çавăн чухлĕ çирĕпрех пулать. Епĕр миршĕн тата ирĕклĕхшĕн, ирĕклĕхшĕн тата миршĕн тăратпăр. Епĕр вăйлă сăмахсем каласа тăрасшăн мар, анчах пирĕн ĕç тата вăйлă чĕре пур".

(ТАСС).

Англипе Франци министрĕсен калаçăвĕсем

Англи пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Англи министрĕсемпе калаçма Франции премйерĕ Даладйе, йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бонне тата ытти çынсем те çентаберĕн 18-мĕшĕнче Лондăна пынă.

Пичет пĕлтернĕ тăрăх, Чемберленца тĕл пулса калаçнă чухне Гитлер Судет нимĕçĕсене „самоопределени" пама татăклăнах ыйтнă. Çак требованин пирки калаçасçĕ те ĕнтĕ Англипе Франци министрĕсем.

(ТАСС).

А. Микоян

26 комиссара асăнса

1922 çулта çырнă „К кровавой годовщине" йатлă статйаран

Ку вăл тăватă çул кайала пулнă. Красноводскри арĕсленисене хупса усрамали çуртăн тăвăр та таса мар камĕрĕнче. Епĕр унта лекнĕренпе виçĕ кун иртрĕ. Пирĕн камĕрăра çак йулташсем пулса: Шаумйан, Джапаридзе, Фиолетăв тата ыт. те—пурĕ 16 çын.

Çенťабĕрĕн 19-мĕшĕнче çĕрле.

Хăшĕсем нарсем çинче, хăшĕсем урайĕнче выртнă.

Пĕрисем çывăраççĕ, теприсем тĕлĕрсе выртаççĕ.

Чӳречерен чейен пăхакан уйăх çути çапçуттăн кĕрет.

Çурçĕр иртни икĕ сехет.

Сасă илтĕнет, тимĕр чанкăртатни.

Алăк уçăлса кайат.

„Социалисла" палачсен банди кĕрсе тăрат.

Перекличкă тума пуçлаççĕ.

Камĕрăра пурăнакансене виçĕ ушкăна уйăраççĕ.

Икĕ ушкăнне камĕрăран илсе тухса кайаççĕ, пирĕнтен уйăрса илсе кайаççĕ вĕсене.

— Ăçта илсе кайаççĕ? — тесе ыйтнă ыйтăва хирĕç çапла ответлеççĕ:

„Кунта вырăн çук. Асхабада куçараççĕ, облăçри тĕрмене".

Чи лайăх йулташсенчен, рабочи клас ĕçĕшĕн пурнăçĕсене шеллемесĕр кĕрешекенсенчен — Баку пролетариачĕн револђуцилĕ çулпуçĕсенчен уйăрăлмали йăвăр вăхăт çитсе тăрат.

Хурлăхлă кунсем, хыпарсăр ернесем иртеççĕ.

Ăçта вĕсем, ăçта илсе кайнă вĕсене—пĕлме пултараймастпăр.

Пĕрисем: вĕсем Асхабадра, теприсем—Перçинче, теççĕ... Пирĕн çывăх йулташсем, Баку пролетариачĕн çулпуçĕсем, Совет влаçĕ—унăн чи лайăх борецĕсем ăçтине епĕр пĕлместпĕр.

Пуçа иккĕленӳлĕ шухăшсем пырса кĕреççĕ. Чĕррисем хушшинче халĕ ĕнтĕ Степан, Алеша, Ваничка çукки çинчен шутлама та йăвăр...

Сасартăк, кĕтмен хушăран пĕр темле çын тĕлĕнмеле хăрушă ĕç çинчен пирĕн пата, тĕрмене пĕлтерет, есерла палачсен халиччен пулман хăрушă та тискер ĕçĕн картинне уçса кăтартат. Çакă, епĕр палламан çын, пире пĕлмен-скер — Красноводскра чукунçул çинче ĕçлекен рабочи, проводник пулнă пулас.

Çав каçхине вăл вокзалта пулнă. Иккĕленӳлĕ, хĕçпăшалланнă, пуçĕсене шурăпа çыхнă çынсене курнă. Вакунсенче—кĕреçесем.

Лайăх мар ĕç, тискер ĕç тума хатĕрленнине туйса илсе, вăл йунлă ĕçе тунине куракаини пулма шутланă. Вăрттăн, пытанса вакунсем хушшипе пынă та буфер çинче вырнаçса тăнă.

Инçетри çеçен хирсене çитсен пуйăса тăратнă. Вакунсем ăшĕнчен коммунисăмăн тыткăна лекнĕ борецĕсене ушкăншарăн илсе тухнă та, чукунçултан кăшт айаккарах илсе кайса, вĕсене тискеррĕн персе вĕлернĕ. Çакна вăл хăй куçĕпех курнă.

Пулеметсем шăтăртатнипе пĕрле вăл шурă террор асапне тӳсекенсен йулашки сăмахĕсене илтнĕ:

— „Епĕр коммунисăмшăн çапăçса вилетпĕр. Сывă пултăр коммунисăм".

... Тул çутăлса килнĕ.

Çынвĕлеренсем васканă, вĕсем хăйсем вĕлернĕ çынсен пур кĕлеткисене те тăпра ăшне тума ĕлкĕреймен.

Баку пролетариачĕн çулпуçĕсем инçетри Закаспийа çеçен хирĕсенчи хăйăрсене хăйсен йунĕпе шăварчĕç.

Хăйсен пурнăçне вĕсем коммунисăм ĕçĕшĕн панă.

Хăйсен паттăр вилĕмĕпе вĕсем Бакури рабочисен есерсемпе меншевиксем улталанă пайĕн куçне уçнă, вĕсене тĕрĕс çул çине—коммунисăмшăн кĕрешес çул çине тăратнă...

Аса илччĕр Баку рабочийĕсем Баку Совечĕн йулашки хут (1918 çулти ийулĕн 25—26-мĕшĕнче) пулнă ларуне, ун чухне социал-предатĕлсем йертсе пынипе Советăн ытларахăш пайĕ англичансем йенне çавăрăнnă, Российă пролетариатне хирĕç тăнă. Çĕнтернипе хавасланнă есерсем тата меншевиксем мĕн пур пӳтсĕрлĕхпе бољшевиксене империалисăма пуççапма хушнă, унсăрăн вĕлерессипе хăратнă. Шаумйан йулташ, çилли тулса çитнипе шуралса кайнăскер, пророкла пĕлтерсе каланă:

„Çĕнтернĕ изменниксем пире те сутăнчăклă çул çине пăрса йама тăрăшаççĕ. Епĕр хамăр пурнăçа тăшмана сутăннă хакпа çăличчен револђуционерăн мухтавлă ĕçĕнче тăрса вилме шутлатпăр".

Вĕсем пролетарилĕ борецсен тивĕçлĕ вилĕмĕ пек мухтавлă вилĕмпе вилнĕ.

Баку пролетариачĕ, ирсĕр палачсем ăна йертсе пыракансемсĕр тăратса хăварнăскер, анчах класлă кĕрешӳре ӳссе çирĕпленнĕскер, хăйĕн çулпуçĕсен йунĕ хакĕпе кашни çул, вĕсем хурлăхлăн вилнĕ кун, вĕсене мухтавлăн асăнат.

Вилнĕ борецсене асăннă чухне куççуљ йухтарни тата халран кайса ӳкни тивĕççĕр. Вĕсен çутă ĕçĕсем Баку пролетариатĕнчен револђуцилĕ çулпа, вĕсен йунĕпе йунланнă çулпа çирĕппĕн тата пĕр пăркаланмасăр пыма ыйтаççĕ; рабочи клас ĕçĕшĕн вĕсем пекех çирĕппĕн тăрса кĕрешме пĕлме ыйтаççĕ; ытах кирлĕ пулсан, вĕсем пекех хисеплĕ вилĕмпе вилме ыйтаççĕ; хăвăрăн патвар алăрсенче коммунисăм йалавне çирĕппĕн тытмала, — тесе хушса хăварнисене хамăрăн пролетарилĕ чĕресенче çуттăн асра тытса пурăнма ыйтаççĕ...

(„Бакинский рабочий" хаçат. 1922 çулти çенťабĕрĕн 20-мĕш). Дон-çи - Ростов. Çенťабĕрĕн 15-мĕш.

Парти пурнăçĕ

Пĕтĕм вăйа хурса ĕçлемеле

ЙĔПРЕÇ. Районра халăх хуçалăхĕпе куљтурăн строительствин чылай участкисенче сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтересси начар пырат-ха.

Буинскăри сланцă рудник строительствине 1934 çултах пуçăннă, анчах унăн пройектне сăтăрла тунине пула, ăна халĕ те туса пĕтермен. Сăтăрла ĕçсен йулашкисемпе бољшевикла кĕрешес вырăнне, рудникăн управљайущчи пулса ĕçленĕ Сайко тата Богданович укçа-тенкĕсене кирлĕ çĕре йамасăр строительствă ĕçне йурийех чăрмантарса пынă. Електростанци, шыв илмели тата ытти пайсене темиçе хутчен пăсса тутарнă, анчах вырăнлă пулман. Çапла майсемпе руднике 950.000 тенкĕлĕх сийен кӳрсе ăна правительствă кăтартнă срукра, 1938 ç. çенťабĕр уйăхĕнче ĕçе йарасsine пурнăçламан.

Вăрманпромхоз 1937 çулта 446.000 тенкĕлĕх сийен курнă, лашасен обозне йурăхсăра кăларнă, производствăла программăна пурнăçламан. Кăçалхи производствă программине те çенťабĕрĕн 10-мĕшне 46 процент çеç пурнăçланă.

Вăрман хуçалăхĕ (лесхоз), унăн директăрĕ пулса ĕçленĕ Йевгенйĕв, сăтăрла ĕçсен йулашкисемпе кĕрешесси çине кирлĕ пек пăхман. Вăрманти йăвăççене йатарласа тунă билетпа парас вырăнне, тĕрлĕ справкăсемпе парса тăнă. Çавна пула вăрманти йăвăç ытларах спекуљантсен аллине лекнĕ, колхозсемпе колхозниксем вăрмансăр тăрса йулнă. Вăрманти утă тата акмали çĕр лаптăкĕсене йединоличниксене сутса йе çурмала парса тăнă. Колхозсем валљи çĕр тума уйăрса панă вăрмана (колфонд) хуçасăрлăха кăларнă, вăл вăрманпа спекуљаци тума ирĕк панă, çавăнпа пĕрлех вăл вырăнсене акмали çĕр тăвассине вăрăма тăснă.

Райçĕрĕç пайĕн аппаратĕнче ларнă халăх тăшманĕ Илйин йурийех коллективизаци ĕçне чарас шутпа йединоличниксене колхозсен вăйĕпе уçă курмали майсем тупса панă, вĕсене колхозсен çĕрĕпе уçă курма пулăшнă, уйхир ĕçĕсем вăхăтĕнче колхозсенче хакла хакпа тара тытса ĕçлеттерме ирĕк панă.

Колхозсен руководствине клас тĕлĕшĕнчен йут çынсене кĕртсе лартнă. Çавсемпе пĕрлех суртлă вăрлăх, пусуçавăрнăш, колхозсене кивçен укçа парас ĕçре сăтăрла ĕçсем туса пынă.

Выљăх-чĕрлĕх ĕçĕнче колхозсем фермăсенче темиçе тĕрлĕ ăратсем усранă („Çиçĕм" колхозри ĕне ферминче 4 ăрат пулнă), выљăх апачĕсем тăвассине сахаллатнă, т. ыт. те.

Суту-илӳ организацисем сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерессипе начар ĕçлеççĕ. ПСК(б) Партин Чăваш Обкомĕн 1938 çулти майăн 9-мĕшĕнче тата ийулĕн 28-мĕшĕнче йышăннă решенисене çителĕксĕр пурнăçласа пыраççĕ. Тавар çавăрнăш планне III-мĕш квартăлшăн 84 процент кăна тултарнă.

Районра строительствă ĕçĕ чăтма çук йапăх. Чурачăк йалĕнчи вăтам шкул çуртне тума пур майсем те пулнă пулин те, халĕ те туса пĕтермен. Буинскăра тин çеç пуçăннă. Районри клуба çуррине тунă та çуркуннеренпе çаплах ларат. Çавăн пекех Йĕпреçри ача çуратмали çурта тума пуçлани 2 çул иртнĕ. Халĕ те туса пĕтермен. Районри строительствă техникĕ Поспелăв нимĕн те тумаст, ун пирки райĕçтăвком нимле мерă та йышăнман.

Çенťабĕрĕн 11-мĕшĕнче пулса иртнĕ пуху çакăнта илсе кăтартнă çитменлĕхсене палăртса, тăшмансен сăтăрла ĕçсен йулашкисене хăвăрт пĕтерме татăклă решени йышăнчĕ.

Ф. Захарăв.

Районри клуб ĕçне вăйлатмала

ЙĔПРЕÇ. Районри библиотекă ĕçĕ иртнĕ çулхисенчен чылай аванланнă темеле. Пайанхи куна библиотекăра 4774 кĕнеке. Библиотекăна кĕнекесем, хаçат-журналсем вулама çӳрекенсен йышĕ кунран-кун ӳссе пырат. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпа библиотекăна шкул ачисем ытларах çӳреме пуçларĕç.

Рабочисемпе служăщисем, вĕренекенсем илемлĕ литературăпа ытларах интересленеççĕ. Вĕсем А. Толстойăн „Хлеб", Шолăхăвăн „Тихий Дон", Островскин „Рожденные бурей", „Как закалялась сталь" т. ыт. произведенисене тулли кăмăлпа вулаççĕ.

Районри библиотекăн куçса çӳрекен библиотекă 6. Вăл библиотекăсем колхозсенчи клубсене, вулав çурчĕсене, библиотекăсене кĕнекесем тăратаççĕ, вырăнсене кайса колхозниксем хушшинче кĕнеке-хаçат вуласа параççĕ. Районри библиотекă вулавçăсемпе уйăхра 1—2 хутчен конференци туса иртерет. Йулашки конференцинче Островскин „Рожденные бурей" произведенине вуласа тухнă. Халђи вăхăтра библиотекă çумĕнче ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çеçси ĕçĕсене вĕренме тытăннă.

Библиотекă çумĕнче хĕрлĕ кĕтес пур. Кунта каççенче кино курма пыракансем пухăнса хаçат-журналсем вулаĕçĕ.

Библиотекă ĕçĕнче çитменлĕхсем те сахал мар. Библиотекăра вуласа ларма уйрăм пӳлĕм çук, сĕтел-пукансем çителĕклĕ мар т. ыт те. Библиотекă çуртне йусамала.

Библиотекă çинчен сăмах хускатнă май клуб çинчен те асăнса хăварма тивет. Клуб ĕççынисемшĕн куљтурă çурчĕ пулса тămala. Анчах, районри клубра йĕркелĕх çук. Клуб çумĕнче нимĕнле кружок та ĕçлемест.

Иртнĕ çулта чиркӳрен çĕнĕ клуб тума тытăнчĕç. Анчах вăл клуба хăçан туса пĕтересси паллă мар, йулашки вăхăтра строительствă ĕçĕ пĕтĕмпех чарăнса ларнă. Райĕçтăвком клуба хăвăртрах туса пĕтерсе, ĕçе йарас пирки нимĕнле ĕç те туни курăнмаст. Клуб строительствине хăвăртлатмала.

Дм. Михайлăв.

Вулав çурчĕн ырă ĕçĕсем

Хусакасси (Трак р-нĕ) йалсовечĕ çумĕнчи вулав çуртне çамрăксем те, ваттисем те ĕç хыççăн хаçат-журналсем вулама нумай пухăнаççĕ. Пĕр кунхине вулав çуртне пухăннă çынсене комсомолец Сорокин „Хасан кӳлли районĕнче мĕн пулса иртнĕ" йатлă статйана вуласа пачĕ. Пурте пысăк интереспа итлерĕç. Малашне ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çеçси йышăннă саккунсене вĕренме тытăнаççĕ. Ку ĕçре йалти учительсемпе комсомолецсем ĕçлеççĕ.

Ваç. Иваншков.

Комсодсен канашлăвĕ

Çенťабĕрĕн 17-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи хапрăк-савăтсемпе учрежденисенчи, шкулсенчи комсодсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çеççийĕ йышăннă ССР Сойузĕн 1938 çулти пĕтĕм государствă бӳджечĕ çинчен Шупашкар хула совет председателĕн РСФСР Верховнăй Совет депутачĕн П. И. Калинкин йулташăн докладне итлерĕ.

Хула бӳджетĕнче суту-илӳ организацисемпе предприйатисенчен пухăнакан государствă налогĕ, страховкă, куљтсбор, займ укçи паллă вырăн йышăнаççĕ. Калинкинă йулташ çак тӳлевсене пухасси мĕнле пыни çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Шупашкар хули виççĕмĕш квартăлта укçа-тенкĕ пухас ĕçре йулса пырат. Займ укçи пухас плана 70,6 процент анчах тултарнă. Вăл шутран рабочисемпе служăщисем йенĕпе илсен 70 процент, ытти халăх йенĕпе илсен 88 процент. Çенťабĕр уйăхĕн малтанхи çур уйăхĕшĕн займ укçи хывмали вăхăт иртрĕ. Ача-пăча театрĕ, педагогикă училищи, полиграф промышленнăçĕнче ĕçлекенсен сойузĕн обкомĕ, кăлбаса мастерскойĕ займ çырăннăранпа укçа пĕр пус та хывман. Ку организацисем çумĕнчи комсодсем займ укçи пухас тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ.

Канашлура тухса калаканисем, займ укçи пухасси йапăх пынипе пĕрлех, иртнĕ çулхи займ облигацисене подписчиксене парса çитерес, çĕнĕрен ĕçе кĕрекенсене займ илме çырăнтарас, ĕçрен тухса кайакансене займ облигацисем парса йарас ĕççем йапăх пынине палăртрĕç.

Суту-илӳ организацисем питĕ йапăх ĕçлени финанс планне тултарассине чăрмантарат.

Канашлу хула комсочĕпе перекет касси комсодсемпе çителĕклĕ йертсе пыманнине палăртрĕ.

Т. Майорăв.



ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Пединститутăн чĕлхепе литературă факуљтечĕ. Сулахайран: А. Антипăвă, З. Галкинă, А. Максимăвă, В. Ландышĕвă студенткăсем лекци итлеççĕ.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Бакури 26 комиссара асăнса

(Вĕлернĕренпе 20 çул тултарнă тĕле)

20 çул кайала, 1918 çулти çенťабĕрĕн 19-мĕшĕнчен 20-мĕшне çĕрле, Каçпи хыçĕнчи инçетри хăйăрсем çинче тĕлĕнмеле хăрушă преступленилĕ ĕç пулса иртнĕ. Англи интервенчĕсемпе вĕсене пулăшакансем—меншевиксемпе есерсем Бакури 26 комиссара, Бакури паттăр пролетариатăн 26 лайăх ывăлĕсене: Степан Шаумйана, Алеша Джапаридзене, Ванђă Фиолетăва, Мешади Азизбекăва, Корганăва, Зевина тата ыт. те тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ.

Ун чухне Совет Российĕ контрреволђуцилĕ восстанисен вутлă кăшăлĕнче тăнă. Çĕршыври Совета хирĕçле пур вăйсем те, капиталисăмлă пысăк государствăсен интервенчĕсемпе пĕрле, пролетарилĕ револђуцине йун ăшĕнче, пусмăрлă, сăтăрлă, диверçилĕ, загăварлă ĕçсемпе пăвса вĕлерессшĕн, влаçа помещиксемпе капиталиссен аллине кайала тавăрса парасшăн социалисăмлă çамрăк республикă çине капланса тухнă.

Вăл вăхăтра Баку пролетариачĕ уйрăмăнах пит те йăвăр условисенче пулнă.

Кавказ леш йенче ĕççыннисен предательсенчен—грузин меншевиксенчен, азербайджан муссаватисенчен тата армйан дашнаксенчен контрреволђуцилĕ коалици пулса тăракан Кавказ леш йенчи комиссариат чăмăртаннă. Вĕсем тăван çĕршыва туртса çурма империалиссене ирĕк панă, вĕсем малтан Германипе Турци империалисăмĕпе, кайран Англи империалисăмĕпе сойуз тунă. Çакă вăл тарçăсемпе лакейсен хăйсен хуçисемпе тунă сойуз пулнă.

Çавăн пек обстановкăри Баку пролетариачĕ бољшевиксем йертсе пынипе Хĕвелтухăçĕнче социалисăмлă револђуци йалавне, халăхсен интернационаллă тăванлăхĕн йалавне малала илсе пынă.

Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă револђуци кунĕсенче Бакури рабочисемпе салтаксен депутачĕсен Совечĕ влаç Советсен аллине куçасси çинчен резолђуци çырса кăларнă. Тĕрĕссипе ун чухне Баку Совечĕ пĕтĕм влаçа тытса тăрайман. Армйансемпе мусулмансен нацилĕ совечĕсем те чылай пысăк вырăн йышăннă, вĕсен пуçĕнче дашнаксемпе муссаватиссем тăнă. Вĕсен хĕçпăшаллă вăйсем те пулнă.

1917 çулти декабĕр уйăхĕнче, Сталин йулташ докладĕ тăрăх, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Степан Шаумйана Кавказ ĕçĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен чрезвычайлă комиссара лартнă.

Апла пулин те Кавказ леш йенче контрреволђуци иртĕнсе, чарусăрланса кайнă. Ку тĕлĕшпе пуринчен ытла грузин меншевикĕсем палăрса тăнă. Вĕсем Шамхор станцийĕ патĕнче Кавказ фронтĕнчен хăйсен тăван çĕршывне таврăнакан вырăс салтакĕсене ешалонĕ-ешалонĕпе персе вĕлернĕ. Салтак шинелĕсене тăхăннă пиншер вырăс рабочисемпе хресченĕсене меншевиксемпе муссаватиссем вĕлерсе пĕтернĕ, асаплантарнă.

1918 çулти март уйăхĕнче Баку Совечĕн вăйĕсем Бакура контрреволђуцилĕ муссаватиссене çĕмĕрсе тăкнă. Влаç пĕтĕмĕшпех Советсен аллине куçнă. Халăх Комиссарĕсен Советне туса хунă, унăн пуçне Шаумйана лартнă. Джапаридзене Шалти ĕçсен халăх комиссарĕ тата продовољстви халăх комиссарĕ тунă, Фиолетăва— халăх хуçалăхĕн Бакури Совечĕн председателĕ, Мешади Азизбекăва—азербайджан пролетариачĕпе хресченсен руководителĕ—кĕпĕрне комиссарĕ тунă, ун çине питех те ответлă задачă—уйессенче Совет влаçĕсене организацилес ĕçе хунă. Хĕçпăшаллă вăйсен руководителне, унчухне Кавказ çарĕн револђуцилĕ комитечĕн председателĕ пулнăскерне, Григорий Корганăва лартнă. Совет влаçĕ Бакура буржуази урса кайсах хирĕç тăнине çĕнтерсе, нефт промышленнăçне, Каçпи суту-илӳ флотне национализацилене. Пысăк çуртсене национализацилеме хатĕрленнĕ. Декрет пройектне Микойан йулташ алă пуснă. Хресчен депутатсен совечĕн сĕсне хатĕрлесе туса иртернĕ. Фиолетăв йертсе пынă халăх хуçалăх совечĕ калама çук пысăк ĕç тунипе, хапрăк-савăт хуçисем пысăккăн саботаж тунине пăхмасăр, нефтепродуктăсен производствине йĕркелеме пултарнă. Баку Халăх Комиссарĕсен Совечĕ хапрăк-савăт хуçисем çине 50 мĕлйун тенкĕ контрибуци хунă. Вĕсем контрибуцирен пăрăннă. Кун хыççăн вара Микойан йулташа хапрăк-савăт хуçисене хирĕç кирлĕ таран репреçсилĕ ĕçсем тума хушнă. Çакăн хыççăн контрибуцине панă пулнă.

Совет Российĕ хутмали йапаласемсĕр, пуринчен ытла нефт çуккипе аптранă. Баку Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çине тăрса ĕçленипе, Астрăханђе Совет Российĕ валљи нефт турттарассине 10 хут ытла ӳстернĕ. Баку пролетариачĕ çĕнтерӳлĕ кĕрешӳре вырăс рабочи класне пулăшма унăн пысăк майсем пуррине ăнланса илнĕ.

Тепĕр йенчен, Баку пролетариатне Совет Российĕ те пысăккăн пулăшнă. Баку рабочийĕсем Совет Российĕнчен хĕçпăшалсем, продовољствисем илсе тăнă.

Ленин тата Сталин Баку пролетариачĕ çинчен, Шаумйан çинчен граждан вăрçин чи йăвăр кунĕсенче те асра тытса тăнă, Бакури событисене хыттăн сăнаса пынă.

1918 çулти февралĕн 14-мĕшĕнче Ленин Шаумйан патне телеграфпа çапла пĕлтернĕ: „Епĕр есĕр çирĕп те татăклă политикă тытса пынишĕн хĕпĕртесе саванатпăр. Çавăнпа пĕрле пит те асăрханулă дипломатийĕ пĕрлештерме пĕлĕр,—вăл халђи йăвăр лару-тăрушăн кирлĕ,—ецĕр вара çĕнтеретпĕр".

Сталин йулташ 1918 çулта çулла Царицынра пулнă. Вăл ытла антăракан рабочисен центрĕсене тырă тăратас тĕлĕшпе калама çук пысăк ĕç тунă тата Ворошилăв йулташ активлăн хутшăнса ĕçленипе çав мухтавлă хулана паттăрăн хӳтлессине организациленĕ. Сталин йулташ Царицынрен пĕрмайах Баку хулине, Шаумйан йулташ патне директивăсем йарса тăнă.

„Сирĕн çитĕнӳсем пире хăваслантараççĕ"—тесе çырнă Сталин йулташ 1918 çулти ийулĕн 8-мĕшĕнче Шаумйан патне йанă çырăвĕнче тата вăл çавăнтах Баку тавра империалиссен вăйĕсем пысăккăн пĕтĕçнĕ вăхăтра Бакури йулташсен мĕнле ĕçлемели çинчен тĕплĕ кăтартусем панă. Револђуци çулпуçĕсен—Ленинăн тата Сталинăн ырласа хаваслантаракан сăмахĕсем Бакури йулташсене çĕклентернĕ, вĕсен малашне кĕрешес ирĕкне ӳстернĕ, вĕсене питех те йăвăр обстановкăра тавçăрса илме пулăшнă.

Бакура событисем хăвăрттăн сарăлса пынă. Кĕрешӳ çивĕчленсе кайнă. Тăшманла вăйсем Баку çине пур йенчен те тапăнса пынă.

Грузинчи меншевикла правительствă Грузи территорийĕ урлă Турци çарĕсене кĕртсе йанă, çапла вара вĕсен вăйĕпе Бакури Советсен влаçне сирпĕтсе антарма шутланă.

Çурçĕр йенчен, Дербент йенчен, Баку çине Дагестанри контрреволђуци пуçлăхĕн — Гоцинскин помещикăн бандисем пынă. Кăнтăр йенчен муссаватиссен бандисем хăратса тăнă, Иран йенчен— Англи интервенчĕсен çарĕсем, вĕсене Денстервиљ генерал йертсе пынă. Англи империалисăмĕн çак тивĕçлĕ представителĕ, Бакури Совет влаçне шалтан çĕмĕрсе тăкас шутпа, загăвăр хатĕрленĕ. Ун çинчен хăйĕн мемуарĕсенче вăл хăй те тунмаст:

„Бакупа çыхăну тытассине епĕ кунсерен ĕçлесе тăракан курйерсем урлă йĕркелерĕм, пирĕн йулташсем—есерсем бољшевиксене сирпĕтсе антарса, Бакура çĕнĕ формăлă тытăм туса хума тата çак ĕçре пулăшма англичансене чĕнме пултарнă пек туйăнни".

Англи разведкин тӳрĕ агенчĕсем —есерсемпе меншевиксем—контрреволђуцилĕ националиссемпе пĕрле выçăпа аптратса, Баку пролетариатне пăвса вĕлерме хăтланнă. Продовољстви халăх комиссариачĕн органĕсене çирĕппĕн кĕрсе ларнă меншевиксемпе есерсем Баку хулине çимĕççем тăратассине пур майсемпе те сийенлесе пынă. Çăкăр пайокĕ ытларан та ытла пĕчĕкленсе пынă. Çавăн пек пулнă: рабочисем пĕр татăк çăкăрсăр, хĕвелçавăрăнăшĕ тата мăйăрсем илнипе çеç пурăнкаланă.

„Хăмăр вăйсемпе тытăнса тăма пултараймастпăр енĕр"—тесе кăшкăрашнă меншевиксем, есерсем, дашнаксем, Провокацилĕ сăмахсем сарса, Англи шпионĕсем— меншевиксем, есерсем тата дашнаксем рабочисене çапла каласа ӳкĕтлеме хăтланнă: англичансем хăйсен „шутсăр нумай" çарĕсемпе пырса кĕнсен Баку хулине наступлени тăвакан турксенчен „хӳтлеме" тата йулав продовољстви тĕлĕшĕнчи пурнăçне „лайăхлатма" пултарĕ.

Бичерахăв полковник — Англи шпионĕ, Денстервиљ тарçи — хăйне Совет влаçĕ майлă пек туса кăтартса, Баку хулине „хӳтленĕ" пек пулса, хăйĕн отрйачĕсе

Выљăхсене— çителĕклĕ апат

Социализмлă выљăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çулран-çул тĕрекленсе пырать. Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçне тата пысăк çитĕнÿсем тăвас тесен, апат çителĕклĕ таран хатĕрлени кирлĕ. Анчах, Пăрачкав районĕнчи колхозсем çакна хакламаççĕ. Сăмахран, „Красногор" колхоз вăрман ăшĕнче вырнаçнă пулсан та, ку вăхăтченех пĕр лав çулçăлă апат хатĕрлемен. Çавнашкалах, кунта çилос хывса хăварма та васкамаççĕ. Планпа 400 тоннă çилос хывмала пулсан, пĕр тоннă та хывман. „Трудовик" колхозра та ĕçсем чаплах мар. 190 тоннă çилос хывса хăварас вырăнне 50 тоннă çеç хывнă.

Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государствă планне ăнăçлăн тултарас тесен, колхоз руководителĕсен выљăх апачĕ пирки татăклă ĕç туни кирлĕ. Çакна та манмала мар, Çийăвă йалсовечĕ çамрăк выљăхсене çитĕнтермелли плана пайанхи кунччченех колхозниксене çитерсе паман. Çакăн пек ĕçлесен, паллах, выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк çитĕнÿсем тума çук.

Засурки участкинче пĕр колхоз та хĕл кунĕсене кĕтсе илме хатĕрленмест. Çав участкăна кĕрекен колхозсенче витесене йусама тытăнман, выљăх апачĕшĕн кĕрешмеççĕ.

А. Й. Храмкин,
ветеринари техникĕ

Авăн çапса пĕтермен

ЕЛĔК. Кăçал уйри тырпулене типтерлĕн тата вăхăтра пуçтарса кĕме пур майсем те çителеклĕ пулнă. Колхоз уйхирĕсенче комбайнсем, жнейкăсем ĕçлерĕç. Апла пулин те Елĕк районĕнчи 126 колхозран 56 колхозĕнче çеç авăн çапса пĕтернĕ. Елĕк колхозĕн вăрлăхлăх хăварнă клеверĕ халиччченех уйра ларать. Районра авăн çапас ĕçе кайа хăварса пынине пулах кĕрхи çĕртме тăвасси йулса пырать, пурĕ те икĕ пин гектар çĕç сухаланă. Чылай йалсоветсенче (Асакасси, Шарыпкă) çĕртме тăвас ĕç хăй тĕллĕн пулса пырать.

В. Йефремăв.

„Хĕрлĕ Кĕтнĕ" колхоз çитĕнĕвĕсем

Хĕрлĕ çырти (Вăрмар р.) „Хĕрлĕ Кĕтнĕ" колхоза Д. Зыкин коммунис йертсе пырать. Вăл йертсе пыракан колхоз организаципе хуçалăх йенчен тĕрекленсех пырать. Çавăн пекех йалхуçалăх ĕçĕсене аван вĕçлесе, районра хисеплĕ вырăн йышăнчĕ. „Хĕрлĕ Кĕтнĕ" колхоз çулсеренех вăйлă тырпул туса илнипе паларса тăрать.

Колхоз авăн çапса пĕтернĕ, государствăна та тырă парса татнă. Вăтам хисеппе гектартан 17 центнĕр ыраш, 29,7 центнĕр урпа, 29,6 центнĕр пăри туса илнĕ.

Кĕрхи тырăсене срукра тата пысăк пахалăхпа акса хăварнă. Халь кĕрхи тырă калчисем лайăх йешереççĕ. Колхоз членĕсем кĕрхи çĕртме тырпул тухăçлăхне вăйлăн ÿстерчине аван туйса илнĕ. Çавăнпа кунта кĕрхи çĕртме тумалли плане ытлашшипех тултарнă.

В. Алендейĕв.

„Çиçĕм" колхозра

(10 çул хушшинчи ÿсĕмсем)

ЙĔПРЕÇ. Çиçĕмкасси йалĕ 1920 çулта çĕç пуçланса кайнă. Колхозсем организациленичченех ку йал, Чăваш республикĕнчи ытти çĕршер, пиншер йалсем пекех, чухăн та тĕттĕм пулнă. «Çиçĕм» колхоз организациленнĕренпе 10 çул хушшинче, 1928 çултан пуçласа 1938 çула çитиччен, йал сăн-сапачĕ палламала марах улшăнчĕ. Колхозра тĕлĕнмеле пысăк строительствă ÿссе пырать. Халь колхозăн ĕнесем хупма икĕ пысăк вите пур—кашнине 100-шер ĕне кĕрет, 50 лаша шăнăçмалăх вите, тырă склачĕ, машинă сарайĕ, вутлă арман, пысăк илемлĕ клуб, динамо-машинă, 7 гектар çинче пăнулми сачĕ пур, хут-хăмăр утарĕнче 150 вĕлле шутланать. Çаксене пĕтĕмпех 7—8 çул хушшинче туса лартнă. Пирĕн партипе совет влаçĕ тата халăхсен çулпуçĕ—Сталин йулташ хăй хресченсемшĕн мĕн таран хытă тăрашнине „Çиçĕм" колхоз примерĕнчен те уççăн курма пулать.

Колхоз хуçалăхĕ тĕрекленсе пынă май, колхозниксем пуйан та культурăлă пурнăçпа пуранма пуçлаççĕ. 1937—1938 çулсенче йалта 10 колхозник çĕнĕрен пысăк та çутă пÿртсем лартрĕç. Колхоза кĕриччен мунча пек пÿртре пурăннă Тарас Дмитрийĕв халь колхозра тÿрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлесе, аслă шурă пÿрт лартрĕ. 8 колхозникăн велоçипед пур.

Çак çентабĕр уйăхĕнче колхоз автомашинă туйанчĕ. Вăл машинăпа колхозри стахановĕцсемпе ударниксене Шупашкара екскурçине илсе кайса килчĕç.

Г. Марушĕв.

Анисимăв колхозникĕн опычĕсем

Йемельйанăв районĕнчи (Калинин облаçĕ) Ленин йачĕпе тăракан йалхуçалăх ертелĕнчи Н. А. Анисимăв колхозникĕн опычĕсем аслăлăх йенчен пысăк интереслă пулса тăраççĕ. Икĕ гектарлă участкăран вăл иккĕмĕш çул ĕнтĕ 1000-шер центнĕр помидор пуçтарса илет. Çак пысăк тухăçлăха вăл тĕрлĕрен агротехникăлă ĕçсем туса ирттерн ипе илнĕ.

Анисимăв йулташăн çĕрулми аврисем çинче помидорсем ÿстерес тĕлĕшпе тунă опычĕсем интереслă. Помидорсен пĕчĕк турачĕсене сыпнă çĕрулми аврийĕсем çĕрулми те помидорсем те панă. Çакăнпа пĕрлех, Мичурин учонăйăн метăчĕпе усă курса, хире-хирĕçле опылени тунипе колхозник-опытник пĕр вăхăтрах çĕрулми те тата помидорсем те пама пултаракан çĕнĕ ÿсен-тăран тăвас тĕлĕшпе ĕçлет.

(ТАСС).

УКЕРЧĔК СИНЧЕ: И. Н. Кузнецов Шупашкар станци строительствинче ĕçлекен каменщик-стахановĕц, вокзал никĕсне хывнă çĕрте ĕçлет.

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Канаш—Шупашкар чукунçул строительствинчи стахановла çирĕмкунлăх

Строительствăри стахановĕц

Йевдокимăв йулташ чукунçул строительствинче иртнĕ çултанпа ĕçлет. Унччен вăл Вăрнар районĕнчи „Комсомолец" колхозра ĕçленĕ.

Çамрăк комсомолĕц çулталăк хушшинче хастарлăн ĕçлерĕ. Вăл малтанах çĕр чавнă çĕрте, унтан костилщикре ĕçлерĕ. Пур ĕçре те вăл плана йаланах 150 процентран кайа мар тултарса пынă.

Нумайах та пулмасть Йевдокимăв йулташ стрелкă лартнă çĕрте ĕçлеме пуçларĕ. Ку ĕçре те вăл ыттисене пример кăтартать, кулленхи нормăна 150 процентран кайа мар тултарать. Çентабĕрĕн 15-мĕшĕнче плана 165 процент тултарчĕ.

Йевдокимăв йулташ 1917 çулта çуралнă. Унăн çентабĕрĕн 23-мĕшĕнче призыва тăмала. Призывччен тата пысăк çитĕнÿ тăвас тесе, халĕ вăл татах та хастарлăн ĕçлет.

Р. Й.

Пулăшни тата вĕрентни кирлĕ

Колбасăв йулташ йертсе пыракан бригадă хальхи вăхăтра пĕрремĕш участкăра стрелкăсем лартнă çĕрте ĕçлет. Епĕр, бригадă членĕсем, пурте нормăна ытлашшипех тултарса ĕçлетпĕр. Лайăх ĕçлеме пире бригадир вĕрентет. Епĕр вăл каланине пурнăçлатпăр. Кашни кунах ĕç хыççăн пĕр çере пухăнса, ыран мĕн ĕçлемелине, пайан мĕнле ĕçленине сÿтсе-йаватпăр. Çитменлĕхсем пулсан, çийĕнчех тÿрлететпĕр.

Çентабĕрĕн 16—17-мĕшĕсенче бригадă плана 169 процент тултарчĕ. Анчах, çапла ĕçлетпĕр пулин те, пирĕн пата килсе, епĕр мĕнле ĕçленипе интересленекенсем çук. Пире пулăшмаççĕ, вĕрентмеççĕ. Виççĕмĕш участкă начальникĕ Голубĕв стахановла çирĕмкунлăх пуçланнăранпа пĕрре те пулман.

Р. Йемельйанăв.

Кану вăхăтĕнче

Шупашкар станцинче ĕçлекенсем ĕç хыççăн вăхăта савăнăçлăн ирттереççĕ. Кашни кунах клуба пухăнса тĕрлĕрен вăйăсем выљаççĕ, ташлаççĕ, хаçат-журналсем вулаççĕ. Стахановла çирĕмкунлăх пуçланнăранпа виçĕ хутчен спектакль лартнă, час-часах кино кăтартаççĕ.

Çентабĕрĕн 17-мĕшĕнче станцăра ĕçлекенсем патĕнче Ишлей районĕнчи „Клевер" колхоз хорĕ концерт лартса пачĕ. Куракансем ку концерта пысăк хаваслăхпа итлерĕç.

Вăрман хатĕрлевĕ

Акшкÿлсемпе танлашăр

Виççĕмĕш квартăла кĕнĕрелпе „Чăвашвăрманпром" вăрман хатĕрлев планне касса хатĕрлес йенĕпе ăнăçлăн тултарса пыма тытăнчĕ. Çентабĕрĕн 15-мĕшĕ тĕлне республикăри вăрманпромхозсемпе механизациленĕ вăрманпункчĕсем 85.704 кубла метр йăвăç хатĕрлесе виççĕмĕш квартăл планне 131,8 процент тултăрнă. Уйрăмăн илсен Акшкÿльти, Кирери тата Çемĕрлери механизациленĕ вăрманпункчĕсем хатĕрлес плана 135 процент ытла тултарнă.

Анчах вăрман хатĕрлекен организацисем çителĕклĕ ĕçлеççĕ теме çук-ха. Вăрман хатĕрлев планне йĕркелĕн пурнăçласа пырасси турттарас йенĕпе çаплах кайа йулса пырать. Турттарассипе пĕр Акшкÿльти механизациленĕ вăрманпункчĕ çеç лайăх ĕçлет. Вăл III-мĕш квартăлти турттарас плана 102 процент пурнăçлана. Унта механизмсемпе турттарасси те аван пырать. Квартăл планне çентабĕрĕн 15-мĕш тĕлне 108 процент ытла тултарнă. Ытти вăрманпромхозсем хытă йулса пыраççĕ. Çавна пула пĕтĕм „Чăвашвăрманпром" тăрăх III-мĕш квартăлти турттарас плана 58 процент ытларах çеç тултарнă.

Кăмаша, Кире, Соловйовăри механизациленĕ çулсем çинче машинсемпе туллин усă курмаççĕ. Çав виçĕ çул çинче 18 машинă ĕçлемеле пулсан, хальхи вăхăтра 11 машина çеç ĕçлеççĕ. Вăл çулсем çинче ĕç тухăçлăхĕ те пĕчĕккĕ. Кире çулĕ тăрăх пĕр рейсра 11 кубла метр турттарса тухас вырăнне 6,6 кубла метр, Соловйовăри çул тăрăх 10 кубла метр вырăнне 7 кубла метр ытларах çеç турттараççĕ.

Ку тарана çитиччен вăрман хатĕрлекен организацисен руководителĕсем вăрман турттарасси йулса пынй, хатерленĕ йăвăç материалĕсем çитмен пирки пулать, тетчĕç. Халĕ ун пек калама сăлтав çук. Çулсем çывăхĕнче 26.793 кубла метр йăвăç выртать. Апла пулсан вăрманпромхозсен, „Чăвашвăрманпромăн" вăл йăвăççене вăхăтра турттарса каларса, вăрман хатĕрлев планне турттарас йенĕпе те вăхăтра тултармала тăвас пулать.

Пирĕн обйазательствă

Епĕр Тутар республикинчи Шлангă йалĕнчен килнĕ Ариф Мальйамăв бригади членĕсем пĕр уйăх ытла ĕнтĕ „Чăвашвăрманпром" тресчĕн Акшкÿльти механизациленĕ вăрманпунктĕнче ĕçлетпĕр. Уйăх хушшинче епĕр нормăна вăтамран 267 процент тултартăмăр.

Вăрман промышленнăçне лайăх ĕçлекен промышленнăçсен ретне кăларас кăмăлпа епĕр, бригадă членĕсем 22 çын пурте, кăçалхи 4-мĕш, çитес çулхи 1-мĕш квартăлсенче те Акшкÿльти вăрманпунктĕнчех ĕçлеме пулатпăр. Епĕр нормăна 200 процентран кайа мар тултарса пыма сăмах паратпăр.

Колхозниксен тухăçлă ĕçĕсем

Колхозниксем хĕрсе утă çулаççĕ. Çак вăхăтра Услапари колхоза Вăрнар вăрманпромхозĕнчен колхозниксемпе вăрманта ĕçлеме догăвăр тума çын пынă. Вăл вăрмана ĕçлеме тухма чĕнет.

Мĕнле-ха хĕрÿ ĕç вăхăтĕнче колхозниксене вăрмана ĕçлеме йама пулать? Колхозри ĕç кайа йулма пултарать вĕт? Колхоз председателĕ догăвăр тăвас пирки чылайах иккĕленнĕ. Анчах вăрманта ĕçлекен колхозниксене паракан пулăшусем çинчен ăнлантарса панă хыççăн, колхозниксем вăрмана ĕçлеме кайассине хапăл туса йышăннă. Вĕсем колхоз ĕçĕсене вăрмана ĕçлеме кайакансемсĕрех туса çитерме май пурри çинчен каланă. Догăвăр тунă. Ийулĕн 18-мĕшĕнче Н. Данилăв, Мйасников, Федăрăв, Козлов т. ыт. те вăрмана йаланлăхах ĕçлеме тухнă.

Услапари колхоз членĕсен 8 çынтан тăракан бригади вăрман турттарнă çĕрте ĕçлеме пуçланăранпа вăхăт нумайах иртмен-ха. Çак кĕске хушăрах колхозниксем хăйсен пултарулăхне пысăккăн кăтартрĕç.

Вĕсем саккăрăн 8 лашапа пĕтĕмпе 939 кубла метр йăвăç турттарса кăларнă. Çапла вара 3-мĕш квартăлта 1000 купла метр турттарса кăларасси патне çывхарса çитнĕ.

Çак ÿсĕме вĕсем бригадăри ĕçе тĕрĕс йĕркеленипе, пĕр-пĕрипе килĕшÿлĕн ĕçленипе тунă. Бригадă пĕр кун хушшинче мĕн-мĕн тумалине малтанах шутласа хунă. Тепĕр шутласа тунă плана пурнăçа кĕртессишĕн бригадă членĕсем ăмăртса ĕçлеççĕ. Лашасене лайăх пăхаççĕ. Çапла ĕçленипе куллен икĕ кубла метра йахăн турттарас вырăнне, виçĕ кубла метр çурă турттараççĕ.

Вăрманта ĕçлесси пысăк тупăшлă ĕç пулнине колхозниксем хăйсем ĕçĕнче курчĕç. Бригадă хăйĕн ĕçĕсемшĕн 11484 тенкĕ илнĕ. Кашни колхозник куллен 25 тенкĕ те 50 пус ытларах илет. Вăрманта ĕçлекен 8 çын колхоз счочĕ çине 4593 тенкĕ укçа панă.

Услапари колхозниксен примерĕпе вăрманта ĕçлеме Хăмăш колхозĕнчен 4 çын тухрĕç. Вĕсем те лайăх ĕçлеççĕ.

Вăрманта ĕçлеме йаланлăхах тухнă колхозниксене пурне те выртса-тăмали хатĕрсем панă. Хватерсем те лайăх. Анчах та партипе профсойуз организацисем вĕсем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе туса пырас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха.

Н. Скворцов.

Дружинă лайăх ĕçлет

ТРАК. „Пчелкино" колхоз çумĕнчи ирĕклĕ пушар дружини лайăх ĕçлеме пуçларĕ. Дружинă начальникĕ Л. Филиппăв йал хушшинче, итем çинче тата тырă склачĕ патĕнче хурал тăракансене йаланах тĕрĕслет. Йулашки вăхăтра хурал тăрас ĕç лайăхланчĕ.

Тырă склачĕсем умне тата итем çине каткасемпе шыв лартнă. Дружинăн насус тата шыв пичкисене лартнă урапасем йусавлă. Кÿлмели таврашсем çирĕп.

Н. Йемельйанăв.

çапăçăва тухнă. Çакă вăл ăна турксене фронт уçса пама тата англичансене чĕнмеле тăвас шутпа кирлĕ пулнă. Дашнаксен хĕçпăшаллă чаçĕсем те çаплах тунă, вĕсем те Совет влаçне сутма хăтланнă. Контрреволюцилĕ вăйсене тĕтă çак лару-тăру та самайах пулăшнă: ун чухне Баку пролетариачĕ азербайджан хресченĕсемпе çителĕксĕр çыхăннă пулнă. Кун çумне çакна хушмала: буржуалă националиссем, граждăн вăрçи, выçлăх тата интервенци туса хунă йăвăр вăхăтпа усă курса, Бакури нумай хисеплĕ национальнăçсен ĕççыннисем хушшинчи нациллĕ хирĕçÿсене пур майсемпе те хĕтĕртсе пынă.

Меншевиксемпе есерсем Совет влаçне пĕтерсе хурас шутпа англичансене чĕнсе илме хатĕрлени Ленинпа Сталина та паллă пулнă. Ийуль уйăхĕн вĕçĕнче Сталин йулташ Царицынран Баку хулине телеграфпа пĕлтерчĕ. Вăл Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет йачĕпе Баку Халăх Комиссарĕсен Совечĕнчен „йут çĕршывсене пăхăнса тăмала мар политикăна ним сăмахсăр пурнăçа кĕртсе пыма тата йут çĕршыв капиталĕн агенчĕсене хирĕç вĕсен çар миççийĕсен членĕсене арĕслесси таранах татăклăн кĕрешме" ыйтнă.

Тепĕр икĕ кунран Мускавран телеграммă çитнĕ, ун çине Свердлăв алă пуснă. Вăл телеграммăра çапла каланă: „Сталин телеграммине тепĕр хут пĕлтерсе хута кĕретпĕр..." —тенĕ.

Çавăн пек условисене пула Баку рабочийĕсем хăшпĕр пайĕ,

Степан Шаумйан

выçлăх аптратнипе тарăхса çитнĕ пайĕ, иккĕленнĕ. Ийулĕн 25-мĕшĕнче Баку Совечĕн анлă ларăвĕнче меншевиксемпе есерсем кăштах ытларах сасăпа Баку хулине англичансене илсе килме кирли çинчен резолюци йышăнтарнă. Предательсем империализмă пуççапма хăйсемпе пĕрле большевиксене мăшкăласа чĕннĕ. Баку рабочисем йуратакан çын, Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ—Степан Шаумйан, Ленинăн тата Сталинăн чи çывăх ученикĕсенчен пĕри, предательсене хирĕç татăклăн ответленĕ:

„Çĕнтерчĕ изменниксем пире те сутăнчăклă çул çине пăрса йама хăтланаççĕ. Епĕр хамăр пурнăçа тăшмана сутăннă хакпа çăличчен—революционерăн мухтавлă ĕçĕнче тăрса вилме шутлатпăр",—тенĕ. Сахаллăн тăрса йулнă пирки, большевиксен хăйсен полномочине парахăçа кăларма тивнĕ. Бакура Совет влаçне пĕтерсе хунă.

Ийулĕн 29-мĕшĕнче Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет ларăвĕнче Ленин Бакури йулташсем Акгли империалисăмĕпе кавар тума килĕшменнине ырласа, çапла каланă: „сăмахпа мар, ĕçпе социалиссемшĕн пĕртен-пĕр тивĕçлĕ утăм турĕç".

Бакура контрреволюцилĕ влаç пулса тăнă. Хăйне вăл „Центрокаçпи тата вăхăтлăх Ĕçтăвакан Комитет диктатурĕ" тесе йат панă. Вăл влаç англичансен аллинчи пукане пулнă. Англичансем Бакуран нефть вăйлăн турттарса тăма пуçланă.

Революцилĕ çарсем Баку Халăх Комиссарĕсен Совечĕн йертсе пыракан работникĕсемпе пĕрле 17 пăрахутпа Астрăхане кайма тухнă. Анчах та вĕсене Центрокаçпин çар карапĕсем тĕл пулса артиллерирен пеме пуçласан, кайала таврăнма тивнĕ. Хĕрлĕ çарсене хĕçпăшалсăрлатнă. Большевиксен партин йертсе пыракан 40 йахăн работникĕсене тытса арĕсленĕ.

Меншевиксемпе есерсем провокацилĕ майсемпе айăпласа йатарласа суд тумалă тунă, хăйсем кураймасăр пурăнакан большевиксене тĕп тăвасшăн пулнă. Анчах Бакура вĕсем çакна тума пултарайман, мĕншĕн тесен хулана туркăсем çитсе кĕнĕ. „Хăйулă" англичансем Бакуран пуриччен малтан тухса тарнă. Вĕсемпе пĕрле меншевикла-есерла „деятельсем" те тухса вĕçнĕ, вĕсем Шаумйанпа тата унăн соратникĕсене туркăсене тулласа тăктарма хăварма шутланă.

Микойан йулташ, Бакури большевикла организацин чи паллă работникĕсенчен пĕри, çав тери хыттăн тăрăшнипе арĕсленĕ йулташсене ирĕке кăлармала тунă. Шаумйан, Джапаридзе, Фиолетăв, Азизбекăв тата ытти чылай большевиксем Совет Российине кайма „Туркмен" пăрахут çине ларнă пулнă. Анчах та пăрахут çинчи командă пăрахута Астрăхане илсе кайман, ăна Красноводска илсе пынă.

Унта Фунтикăвăн, Англи çар миççи представителĕн Тиг-Джонс капитанăн аттисене çуласа тасатакан палачăн, есерла правительстви пуç пулса тăнă.

Красноводскра „Туркмен" пăрахутпа пынă большевиксене арĕсленĕ.

Çентабĕрĕн 19-мĕшĕнчен 20-мĕшне çĕрле Бакури 26 комиссара Асхабада илсе кайатпăр тесе суйса, тĕрмерен илсе кăларнă та вакунсем çине лартнă.

Вĕсемпе йунашар вакунра Тиг-Джонс капитан йертсе пыракан есерла палачсем вырнаçнă. Малала пынă çĕртех пуйăс пĕр 207 çухрăм кайсан, Перевал тата Ахча-Куйма станцисем хушшинче чарăннă. Кунта арĕсленĕ Баку комиссарĕсене вакун ăшĕнчен ушкăн-ушкăн илсе кăларма пуçланă. Чукунçултан пĕр 30 чалăш айăкра тĕлĕнмеле тискер ĕç тунă. Баку комиссарĕсене тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ. Халăхăн шанчăклă та ырă ывăлĕсем çирĕппĕн вилнĕ, вĕсем: „Сывă пултăр коммунисăм!" тесе кăшкăрнă.

Çак асран каймн куна, Бакури 26 комиссар вилнĕ куна, паллă туса, пирĕн çĕршыври ĕççыннисем ак çакна та асра тытаççĕ: троцкисла-бухаринла ирсĕрсем пирĕн халăхăн чаплă ывăлне, большевикла партин пысăк деятельне, Баку пролетариачĕ тата пирĕн çĕршыври мĕн пур ĕççыннисем йуратакан çынна—Çергей Миронович Кирăва вĕлернĕ. Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем çакна та асра тытаççĕ: киревсĕрсем, фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла тарçисем пролетарилĕ аслă писателе—А. М. Горькине тискеррĕн вĕлерчĕ, вĕсем чи лайăх сталинĕцсене, пирĕн большевикла партин шанчăклă ывăлĕсене—В. Р. Менжинскине тата В. В. Куйбышевă вĕлернĕ.

Прокофий Джапаридзе

Камăн аллисем пролетариатăн мухтавлă мученикĕсен йунĕпе варланнă, çав çынсене ĕмĕр-ĕмĕрех ылханса усал сунĕç. Пирĕн халăхăн чĕрисем революци ĕçĕшĕн чĕререн çунса ĕçлекенсен, ĕççыннисен телейĕшĕн чĕререн паранса ĕçлекенсен пурнăçне вăхăтсăр татнă етемсем çине хыттăн тарăхнипе тулнă.

Сталин йулташ революцилĕ сыхăлăха ÿстерме, халăх тăшманĕсене, изменниксене тата социализмăн предательсене тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерсе тăкма куллен кун вĕрентет.

Троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла ирсĕрсем валли совет çĕрĕ çинче вырăн çук тата пулма та пултараймасть. Пирĕн мухтавлă совет разведки сталинла Нарком Н. И. Йежов йулташ йертсе пынипе, социализмăм кĕрешсе илнисем çине, пирĕн совет стройĕ çине хăйĕн ирсĕр аллине çĕклеме хăйахансене пурне те пĕтерсе тăкрĕ, малала та пĕтерсе тăксах пырĕ!

Шаумйан, Джапаридзе, Вань Фиолетăв, Мешади Азизбекăв тата ыт. те социализмăшăн кĕрешнĕ, халь ĕнтĕ социализмăм çĕнтерчĕ. Сталин йулташ йертсе пынипе пирĕн çĕршывра тĕпрен илсен социализмăм тунă. Социализмăн халама çук пысăк çĕнтерĕвĕсене Сталинла Конституци çине, çĕнтерÿлĕ социализмăн чи демократилĕ совет Конституцийĕ çине çырса хунă.

Асапланса вилнĕ аслă çынсен—26 комиссарăн çутă ăс-тăнĕ Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн кĕрешнĕ çĕрте çирĕплĕх примерĕ пулса тăрать.

„Никогда,
никогда
ваша кровь не остынет,—
26—
Джапаридзе и Шаумян!
Окропленные
вашей кровью
пустыни
Красным знаменем
реют,
над нами шумя...".
(Маяковский).

Бакури 26 комиссар çинчен асăнни пирĕн халăха сыхăлăхлă пулма, социализмăн мĕнпур тăшманĕсене пĕтерсе тăкма, Ленинăн—Сталинăн аслă ĕçĕ пĕтĕм тĕнчипе çĕнтерессишĕн кĕрешме чĕнет.

А. Азизйан.

Испанири фронтсенче

Центрти фронтра çенŤаберĕн 17-мĕшĕнче фашиссем Университет городокĕнче минă сиктерсе йана, анчах республиканĕçсене нимĕнле сийен те тăвайман.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук.

(ТАСС).

Лигă наци пленумĕнче

Китай Йапонине хирĕç санкцисем йышăнма ыйтаŤ

ÇенŤаберĕн 15-мĕшĕнче Женевăра пулса иртекен Лигă наци пленумĕнче Китай делегачĕ Веллингтон-Ку. сăмах тухса калана.

Иапони агреççийĕ ыйтăвĕпе Лигă наци темĕн чухлĕ резоЉуцисем тата документсем çырнине астутарса, çав заявленисем Йапонин Китайри агреççине чарайман, тенĕ Ку. Ĕç йалтах урăхла пулчĕ: Йапони агреççийĕ сарăлчĕ тата вăйлăланчĕ.

ХаЉхи вăхăтра Китайра Йапони салтакĕсем пĕр мĕлйунран кайа мар шутланаççĕ. Çапăçусем халĕ вунпĕр провинцинче пулса пыраççĕ. Мирлĕ халăха пĕр мĕлйун çын ытла вĕлернĕ. Чи сахалтан та 30 мĕлйун беженцă кил-çуртсăр тăрса йулнă. Нумай йалсене тата хуласене çĕмĕрсе пĕтернĕ. Пĕр Шанхай хулинче çеç йапонĕçсем тунă тăкаксем 5 мĕлйард доллара çитеççĕ. Вăрçă пуçланнă хыççăн кăçалхи ийуЉ уйăхĕччен Йапони самоЉоЧĕсем хўтлĕхсĕр хуласем çине 2.204 хут вĕççе пырса тапăннă. 10.500 çынна вĕлернĕ, 13.000 çынна амантнă, 92.000 çурта çĕмĕрсе пĕтернĕ.

Анчах та захватчиксен кунтан та ытларах варвăрла метăчĕ—вĕлерекен газсемпе усă курни пулаŤ.

„Китайа илес пулсан,—тенĕ Веллингтон-Ку,—кунта епĕр, Лигă наци принципĕсене, çавăн пекех пирĕн территорилĕ пĕрлĕхе тата уйрăм халăх пулса пурăнассине хўтлесе, Йапонине хирĕç малала та тăма çирĕппĕн йышăнтăмăр".

Çак йăвăр лару-тăру умĕнче,— тесе калана малала Ку,—Лигă наци, Китайа виçĕ санитари отрйачĕ йанисĕр пуçне, резоЉуцисемпе çеç чарăнса тăнă.

Китай,—тенĕ Веллингтон,—Лигă нацирен пактăн 17-мĕш статйине халех пурнăçа кĕртме (17-мĕш статйапа агрессăр Лигă составне кĕмест пулсан усă кураççĕ), Йапонине хĕçпăшалсем, аммуницисем, самоЉотсем, çар промышлĕнначĕ валЉЉи нефŤ тата чĕртавар илсе кайма, çавăн пекех тата Йапонине кивçен укçасем пама чарса лартма ыйтаŤ. Китай Лигă нацирен: Иапонине варвăрла метăдсемпе, вĕлерекен газсемпе усă курса тата гражданла халăхсем çине сывлăшран бомбăсем пăрахса вăрçа малала тăсса пырассине чарма витĕмлĕ мерăсем йышăнма ыйтаŤ. Ку ĕç йевĕпе, Лигăна фронтри лару-тăру çинчен каласа парас шутпа, Лигă нацин фронта нейтралЉчăй набЉудатĕлсен комиççине йарсан питĕ лайăх пулĕччĕ.

(ТАСС).

ОкŤаберти Социалисăмлă Аслă революЉуци 21 çул тултарас умĕн

„Сталинуголь" трестăн Челускинецсен йачĕпе тăракан малта пыракан 1-мĕш №-лĕ шахтă коллективĕ ОкŤаберти Социалисăмлă Аслă революЉуци 21 çул тултарнине тивĕçлĕн кĕтсе илес тĕлĕшпе Сталинск облăçĕнчи мĕн пур горЉаксем патне çыру йанă.

— Сталинск облăçĕнчи шахŤорсем кайра пымĕç, Ворошиловград тата Ростов облăçĕсенчи горЉаксемпе пĕрле сарса пыракан социалисăмлă ăмăртура çĕнтерекенсем пулса тухĕç тесе шутлатпăр,—тесе калана горЉаксем патне йанă çырура.

Шахтă коллективĕ Октабĕр уйăвĕ тĕлне вăтамăн 2.500 тоннăран 3.000 тонна çити кăмрăк кăларма, çулталăк планне декабĕрĕн 15-мĕшне тата шахтăра кăмрăк кăларас çĕрте ĕçлекен мăçтăрсен хисепне пĕр пин çынна çитерме пулнă.

(ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

●● Вунпĕр ача амăшĕ Марийа Васильевна Чебарĕва, Сталин хулинчи Трудовски поçолăкра пурăнакаскер, нумай ачалă амăшĕсене пособи парасси çинчен декрет кăларнăран вара ачасене ўстерме 20 пин тенкĕ пособи илнĕ.

●● Çенťаберĕн 10-мĕш тĕлне Совет Сойузĕ тăрăх 4.802 пин центнĕр сахăр кăшманĕ кăларнă.

(ТАСС).

„ЛенфиЉм" киностудинче Н. Погодин сценарийĕ тăрăх „Человек с ружьем" кинокартинăна ўкерсе çитереççĕ.

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: В. И. Ленин Путилăвски савăтра тухса калани. Ленин ролЉне Мускаври РевоЉуци театрĕн артисĕ М. М. Штраух выЉаŤ.

Е. Хайкин фото-ўкерчĕкĕ (Сойузфото).

Çамрăксен художĕствăлă пултарулăх кружокĕсен смотăрĕ

Комсомол 20 çул тултарнă уйава хатĕрленнĕ май, комсомол Чăваш обкомĕ йышăннă тăрăх, çенŤаберĕн 25-мĕшĕпе окŤаберĕн 10-мĕш хушшинче çамрăксен художĕствăлă пултарулăх кружокĕсен районсенчи смотрĕ, окŤаберĕн 27—29-мĕшĕсенче республикăри смотр пулса иртмеле.

Ку ĕç—калама çук пархатарлă, политикăлă-массăлă пысăк ĕç пулса тăраŤ. Халиччен пулса иртнĕ радиофестиваЉсенче, вĕсен тематики анcăртарах пулнă пулин те, сахал мар талантсем палăрчĕç, колхозсенчи, предприйатисенчи пултарулăх кружокĕсенчен чылайĕшĕ пĕтĕм республикă умĕнче мухтавлă вырăн йышăнма пултарчĕç (Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Маклашкинăри хор, Канашри вакунсем йусакан савăтри хор, Çĕрпў районĕнчи Рындинари хор, Шăмăршă районĕнчи Буйанăвăри хор т. ыт. те). Халĕ вĕсем час-часах радио тăрăх тата тĕрлĕ вечĕрсенче тухса концертсем параççĕ, — итлекенсенчен начар мар отзывсем илеççĕ.

Анчах иртнĕ радиофестиваЉсен çитĕнĕвĕсемпе пĕрлех, çитменлĕхĕсене те палăртса хăвармала. Чи малтанах вырăнсенчи драмкружоксен тата ачасен художĕствăлă пултарулăх кружокĕсем çинчен. Вĕсем иртнĕ радиофестиваЉсенче хăйсен пултарулăхĕсене кăтартма тивĕç илеймен. Искусствă ĕçĕнчи тăшмансем çак массăлă ĕçе хутшăнма ирĕк паман вĕсене, сăтăрлă майсемпе чăрмантарса пынă. Халĕ иртекен смотрсене хор кружокĕсемпе тата уйрăм йурăçă, ташăçă, такмакçăсемпе пĕрлех, колхозсемпе предприйатисенчи драмкружоксене, ачасен художĕствăлă пултарулăх кружокĕсене те активлăн хутшăнтарасси кирлĕрен те кирлĕ задачă пулса тăраŤ.

Смотрсене хатĕрленес тата вĕсене йĕркелесе иртерес ĕçе халăх творчĕствин çуртне хушнă. Ку ĕçе тивĕçлĕн хатĕрленсе ăнăçулăн иртересси вырăнсенчи комсомол, профсойуз оргăнĕсем, колхоз правленийĕсем, предприйати дирекцийĕсем художĕствăлă пултарулăх кружокĕсене кўллен конкретлă пулăшу парса пынинчен те нумай килет.

Ф. Ландышĕв.

Драмкружок ĕçĕсем

Вăрман Кипекри (Шăхасан р.) вулав çурчĕ çумĕнчи драмкружокра 17 çын тăраŤ. Драмкружок аван ĕçлет. Драмкружок членĕсем нумайах пулмасŤ „Лукка кум" йатлă пиеса лартса пачĕç. Пиесăн роЉĕсенче уйрăмах М. Кузнецовă, К. Архипăв, К. Романăвă йулташсем аван выЉарĕç. Спектаклă курма ваттисем те, çамрăксем те нумай пычĕç.

Т. Никишов.

Ĕçе хакламасŤ

Шĕкĕрти (Шăхасан р-нĕ) Зайцĕв почталЉйон хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе нимĕн те ĕçлемест. Колхозниксен хаçат-журнал çырăнма почталЉйона шыраса çўремеле килет. Шĕкĕр йалсоветне виçĕ колхоз кĕрет, шкул, промертел тата ытти те пур. Апла пулин те кунта хаçат-журналсем пурĕ те çĕр екземпЉар анчах пырса тăраççĕ.

Д. И.

Йĕркелĕ ĕçлеççĕ

Вĕренў çулĕн малтанхи кунĕсенчех Канашри педучилишчăра тĕрлĕрен кружоксем ĕçлеме пуçларĕç.

Радио ĕçне йуратакансен кружокĕнче 20 ача вĕренеççĕ. Кружока физикă преподавателĕ Т. Лазарĕв йулташ йертсе пыраŤ. „ПВХО" кружокĕнче 105 ача, „Ворошиловский стрелок" кружокĕнче—75, „ГСО" кружокĕнче 50 ача вĕренеççĕ. Кружоксенче вĕренекенсем ПСÇЛКС 20 çул тултарнă уйав тĕлне пурте значоклă пулассишĕн тăрăшаççĕ.

Кунсăр пуçне педучилишчăра литературă, фото, хор кружокĕсем организациленĕ. Кружоксенче заЉатисем йĕркелĕ иртеççĕ.

П. Тихăнăв.

Техникумри вечĕр

Вĕренекенсем хушшинче илемлĕ литературăпа интересленекенсем питех те нумай. Вĕсем литературăна вулаççĕ çеç мар, тата хăйсем те çырма тăрăшаççĕ.

Сĕнтĕрвăрринчи çĕрйĕркелўпе мелиораци техникумĕнче те литературăпа, уйрăмăнах чăваш литературипе интересленекенсем вумай. Кăçалхи вĕренў çулĕнче чăваш литературине вĕренме тытăннă май (пĕлтĕр ку предмет пулман кунта), вĕренекенсем чăваш писатĕлĕсемпе тĕлпулчĕç.

Техникума августăн 11-мĕшĕнче Уйăп Мишши, Н. И. Шелепи, Н. Ваçанкка, Тукташ, И. Ивник т. ыт. те пычĕç.

Пирвай техникумра чăваш литературине вĕрентекен преподаватĕл писатĕлсемпе вулакансем хушшинче тачă çыхăну тыни питех те кирли çинчен каларĕ, унтан писатĕлсен правленин председателĕ Уйăп Мишши писатĕлсем хаЉхи вăхăтра мĕн çырни çинчен каласа кăтартрĕ.

Студентсемпе писатĕлсен вечĕрĕ аван иртрĕ.

Љ. А.

БИБЛИОГРАФИ

Пĕр сăмаха икĕ тĕслĕ çырма вĕрентекен кĕнеке

Çак кунсенче пирĕн республикăри шкулсем букварь хыççăн тăван чĕлхепе вуламали (пĕрремĕш çул валЉЉи) кĕнеке илчĕç. Кĕнекене А. С. Отачкин хатĕрленĕ. Ку кĕнеке (пĕрремĕш пайĕ) тăваттăмĕш изданипе тухрĕ ĕнтĕ. Çапах хатĕрлекен ку изданире те материал тĕлĕшпе пысăк улшăнусемех туни курăнмасŤ. Кĕнеке материалĕ пĕтĕмĕшпе илсен, киввийех. Автăрăн тĕп ĕçĕ—кĕнекери сăмахсене çĕнĕ орфографи правилисемпе парасси пулнă. Çак тĕлĕшпе ĕнтĕ ларнă автăр кĕнекене çĕнĕ издани валЉЉи хатĕрленĕ чухне.

Анчах кĕнеке çинче автăр сахал ларнă, васканă, çĕнĕ орфографипе паракан сăмахсене лайăххăн пăхса тухман, нумай йăнăшсем хăварнă. Редактăрĕ автăра ытларах шаннă, ун алли хĕрлĕ кăранташ тытса курман, автăр хăварнă орфографилĕ çитменлĕхсене тўрлетмен. Ахалтен мар ĕнтĕ кĕнекере орфографи йăнăшĕсем, пĕр сăмахах икĕ тĕслĕ калависем тата урăх йăнăшсем те тем чухлех йулнă. Сăмахран, „фабрика-завод", „машина-трактор" пĕр правилăпа çырмали сăмахсем, кĕнекере вĕсене икĕ тĕслĕ панă: фабрикă завод (68 стр.), машина-трактор (69 стр.). Ун пек сăмахсем тата та пур: челюскинецсен лагерне (56 стр.), фабрикă (27 стр.), больнича (50 стр.), заставă, тревога (31 стр.) т. ыт. те. Кĕнекере пĕр сăмахах икĕ тĕслĕ те панисем пур. Акă вĕсем: капиталиссем—капиталистсем (21 стр.), коммунисла (32 стр.), коммунистсен партийĕ (28 стр.), Российăри—Россияри (31 стр.—77 стр.), шпулькă-шпулЉка (68 стр.), пионеркă (31 стр.), пионерка (73 стр.) т. ыт. те.

Çавăн пекех труба, завод, пароход, тетрадь сăмахсене вырăс графикипе, Çĕпĕр, пасар, пристăнЉ сăмахсене чăваш графикипе панă. Автăр шутланă пулмала: Çĕпĕр, пасар, пристăнЉ „таса" чăваш сăмахĕсем, çавăнпа вĕсене чăваш графикипе çырмала; труба, завод, пароход, тетрадь сăмахсем—урăх чĕлхерен килнĕскерсем. Çавăнпа вĕсене вырăс графикипе çырмала. Акă характерлă предложени: „ПристăнЉсен çумĕнче пароходсем тăраççĕ" (72 стр.). Автăр кунта сăмахсене уйăрса пăтрашса кайнă.

Тата йатсене мĕнле пăхнă-ха автăр? „ПеŤŤапа Хветке тавлашса илчĕç" (62 стр.), Валя тăракан хĕрарăма пĕр самантлăх та куçран вĕçертмен" (31 стр.). „Тимахви вăрмана вутă тийеме кайнă" (17 стр.). Иал хĕрринчи Митраппан сарай çинчен йур тăкаŤ" (62 стр.). Ку примерсенчен çакă паллă: автăр йатсене уйăраŤ, хăшне-пĕрне пăсса параŤ. ВалЉăна Валя тесе панă, ПеŤŤа, Ваççа, Хветке йатсене Петя, Вася, Федя тесе çырман. Кунта автăр йатсене мĕнле çыру принципĕсемпе çырнине епĕр пĕлейместпĕр-ха. Тимахви йатри—ф саспаллине мĕншĕн хв урлă панине те пĕлейместпĕр. Кунта автăр каллех пăтрашнă. Мĕншĕн Петя, Вася, Федя тесе çырас мар? Мĕншĕн Тимафи йе Тимофей мар? Митраппан тени те килĕшўсĕр,

Пунктуаци çитменлĕхĕсем те нумай кĕнекере. „Хăймине уçласа, уçламçу тăваŤ". Кунта мĕншĕн запйатайа лартнă? Çĕрле йала пырса выЉăхсене тапăнаŤ". Кунта мĕншĕн запйатайа лартман? „Çĕре лайăх ĕçлесе тăнипе, пирĕн колхозăн тырри те, тĕрлĕ çимĕçĕсем те çулсеренех лайăх пулаççĕ". Кунта предложенилĕ дополненине запйатайапа уйăрнă. Епĕр пĕлнĕ тăрăх предложенилĕ дополненисене нихăçан та запйатайа лартса уйăрмаççĕ.

Автăр сăмахсене çĕнĕ орфографипе паранçи пулса, пĕтĕм ĕçе пăтраштарса пĕтернĕ.

Çак çитменлĕхсем—пысăк çитменлĕхсем, вĕсем кĕнекен пахалăхне чакараççĕ, ачасемпе кĕнекепе ĕçлессине йăвăрлатаççĕ.

П. Никифăрăв.

Оринкинăри туллимар вăтам шкул учителĕ.

„Случай на границе"

Инçет-Хĕвелтухăç çинчен çĕнĕ фиЉм

ХаЉхи вăхăтра Совет Сойузĕн пысăк хулисенче „Случай на границе" йатлă оборонăлă кинофиЉма пысăк ăнăçлăхпа кăтартаççĕ.

Нумайах пулмасŤ Хасан кўлли районĕнче çапăçусем пулса иртнĕ май, çак фиЉм пит те пысăк вырăн йышăнаŤ. Картинăна Дмитрий Боголепăв режиссор тунă.

ФиЉм Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи пограничниксен пысăк мар отрйачĕн (отрйад пуçлăхĕ Голубĕв лейтенант пулнă) геройла ĕçĕсем çинчен каласа параŤ. Виçĕ йапонĕц совет çĕршывĕн чикки урлă каçса пирĕн территори çине 600 метр шала кĕрсе кайаççĕ. Пирĕн территори çинче вĕсем пысăк вырăн йышăнакан стратегилĕ обйектсене топографипе ўкерме тытăнаççĕ.

Çивчĕ пограничниксем тăшмана çийĕнчех палăртаççĕ. Бойецсем йапонĕçсем патне вăрттăн йăпшăнса пырса, совет чикки урлă каçнă виçĕ йапонĕца та пăшалпа пĕрре пемесĕр йарса тытаççĕ. Анчах, çакăн пек пулса иртнĕ епизода чикĕн лĕш йенче йăвăç çинче ларнă йапонĕц сăнанă. Çакăн хыççăн йапонĕçсен хĕçпăшалланнă пысăк отрйачĕ йуханшыв урлă каçса ССР Сойузĕн территорине кĕрсе кайаŤ. 20-мĕш №-лĕ чикĕ палли захватчиксен тылĕнче йулаŤ. Йапонĕçсем совет пограничникĕсем çине вăйлăн пеме пуçлаççĕ. Вара çапăçу пуçланаŤ. Тăшмансен йышĕ пирĕн пограничниксен йышĕнчен темиçе хут ытларах пулнă. Çапăçура пуринчен ытла пулеметчиксем хăйсене геройла тытаççĕ. Аманнă пулеметчик командиртан стройрах хăварма ыйтнă чухне, кино куракансем питĕ хытă алă çупаççĕ.

Совет пограничникĕсен паттăрлăхĕ тата хăйулăхĕ, вĕсен чăтăмлăхĕ, çар ĕçне питĕ лайăх пĕлни, вĕсен çулăмлă патриотисăмĕ пирĕн совет чиккине пăсакансене çĕнтерме майсем параççĕ. Йапонĕçсем, нимĕн тума пĕлменнипе, хăйсен чиккисем патне кайала чакаççĕ. Анчах йапонĕçсем чикĕ патне çитсе пынă чухне, вĕсем çине заставăран килсе çитме ĕлкĕрнĕ утлă отрйад тапăнса, вĕсене татăкланах çĕмĕрсе пĕтерет, Çапăçу резуЉтачĕ çакăн пек: пĕр тăшман та хăйĕн чикки патне чĕррĕн кайайман.

Ленинградри хапрăк çак фиЉмăн 340 копине ўкернĕ те ĕнтĕ. Вĕсене халĕ васкавлăн Совет Сойузĕнчи хуласене йанă.

* * *

Шупашкарти кинотеатр дирекцийĕ пĕлтернĕ тăрăх, „Случай на границе" кинофиЉма Шупашкарта çывăх кунсенчех кăтартма пуçлаççĕ.

Пуйан та куЉтурăлă пурăнăç

Вăрман Йенĕш йалĕ (Шăхасан р.) йулашки çулсем хушшинче тĕпренех улшăнчĕ. Колхозниксем пуйан та куЉтурăлă пурăнма пуçларĕç. Пушă вăхăтсенче вулав çуртне пухăнса хаçат-журналсем вулаççĕ, радио тăрăх паракан хыпарсене итлеççĕ.

Иртнĕ çултанпа йалти 11 колхозник çĕнĕ пўрт лартрĕç. Çавăн пекех чылай колхозниксем велосипед, çĕвĕ машинĕ, сăмавар туйаннă.

Колхозсем тырпул нумай туса илнипе пĕрлех, выЉăх-чĕрлĕх йышлă усракан пулчĕç. Кашни хуçалăхăн ĕне пур. Чылай колхозниксем хурт хăмăр усраççĕ.

И. Бычков.

Пособи илеççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Нумай ачалă пирки Турханти „Хресчен" колхоз членĕсем Скворцовăпа СтоЉаровă тата Елĕкри Енгелс йачĕпе тăракан колхоз членĕ Йадуванкинă государствăран икĕ пиншер тенкĕ пособи илчĕç. Вĕсем çав укçапа хăйсен ачисем валЉЉи хĕлле тăхăнма ăшă тумтирсем илсе пачĕç.

Е. Самарин.

Автомашинă туйанчĕ

ШĂХАСАН. Районра государствăна ирĕккĕн аш-какай сутасси вăйлансах пыраŤ. Çак кунсенче Анаткас Кипечри „Чуваш. ЦИК" колхоз патшалăха аш-какай парса автомашина туйанчĕ.

Дм. Иванов.

СПОРТ

Футбол командисенче çирĕп дисциплинă тумала

Футбол вăййипе хулара кĕркуннехи малти вырăна тухассишĕн пыракан ăмăртура пĕрремĕш группăри командăсем тата ачасен командисем выЉаса пĕтерчĕç. „Темп" команди „Учитель" командине 8:0, „Спартак" команди „Буревестник" командине 4:0 шутпа çĕнтерсе, икĕ команди те финала тухрĕç. „Спартак" общĕствин ачасен команди хăйпе тĕл пулса выЉанă пур командăсене те çĕнтерсе, хулари малти вырăна тухрĕ.

ÇенŤаберĕн 18-мĕшĕнче „Темп" тата „Спартак" общĕствисен пĕрремĕш командисем тĕл пулса выЉарĕç. Анчах çак икĕ командă хушшинче йаланхи хирĕçў, йаланхи тавлашу, пĕр-пĕрне, курайманни вăййа вĕçне çитерме май памарĕ. Вăййа пуçлансанах икĕ команди йенчен те йĕркене пăсакансем нумай пулчĕç. Судйа Бурцĕв йулташ вăййа йĕркелĕ илсе пыма пултараймарĕ. Вăл вăййа йĕркине пăснă-шăн ИЉйина („Спартак") кăларса йачĕ. Çакăн хыççăн, спартаковĕçсем выЉама пăрахрĕç. Капитан Зефирăв хăйĕн командине йĕркелĕ тăвас вырăнне, ăна пăсса пычĕ.

ÇенŤаберĕн 18-мĕшĕнче пулнă факт физкуЉтурăпа спорт ĕçĕсен хула комитечĕ, ирĕклĕ спорт общĕствисен руководителĕсем совет футболисĕсем хушшинче çирĕп дисциплинă тăвас, вĕсене куллен вĕрентсе çитĕнтерес тĕлĕшпе пачах çитеймĕсĕр ĕçленине тата тепĕр хут кăтартса параŤ. Командăсем хушшинче йулташлăх сукки, вĕсем пĕр-пĕрине курайманни футбол вăййине кăна мар, пĕтĕм физкуЉтурă ĕçне сарса пыма чăрмантараŤ. Футбол командисен капитансем, капитанăн политикă йенĕпе ĕçлекен помошникĕсем пур. Командăсене çирĕп дисциплинăлă тăвас, политикăлă-воспитани ĕçне сарас тĕлĕшпе вĕсем мĕн тăваççĕ-ши? Футбол командисенче çирĕп дисциплинă, йĕркелĕх тăвасси—вĕсем хушшинче политикăлă воспитани ĕçне вăйлатма кирли çинчен калаŤ.

● Волейбол вăййипе хулари малти вырăншăн ăмăрту пулса иртрĕ. Вăййа 16 командă: 12 арçынсен, 4 хĕрарăмсен командисем хутшăнчĕç. „Темп" общĕствин арçынсен команди, „Спартак" общĕствин хĕрарăмсен команди хулари малти вырăна тухнă.

● ÇенŤаберĕн 18-мĕшĕнче иккĕмĕш группăри командăсем хулари малти вырăншăн выЉама тытăнчĕç. Ку кун „Правда" командипе „Темп" общĕствин 2-мĕш команди выЉарĕç. Вăйăра „Темп" команди 4:0 шутпа çĕнтерчĕ.

Тирпейсĕр канцеЉари

ИЛЙИНКĂ. Атăл çине йухса тухакан пĕр пĕчĕк çырма хĕрринче, йал хĕрринче, пĕр илемлĕ çурт лараŤ. Икĕ айаккинчен тăваттшар кантăк. Пўрте урамран крылЉца тăрăх кĕмеле. КрылЉца тăрринче хĕрлĕ йалав вĕлкĕшет. Унтах илемлĕн çырнă йалсовет вывĕски.

Анчах ку чăнахах та йалсовет канцеЉарийĕ иккенне çак кăтартусем тăрăх мар, пачах урăх тĕслĕхсенчен палласа илесшĕн. Акă вăл уйрăмлăхсем: йари усă вырăсла хапха. Хапхан хăрах йенĕ таталса аннă. Килкарти хўми кĕçвĕç ўкес пек кисренсе лараŤ, сылтăм йенче пачах та çук. Кил картисем те йуханнă. КрылЉца картлашки тăрăх шикленсе çеç улăхатăн: хаЉ хаЉ ишĕлсе анас пек шаймăк. Алăкĕ те шăтăк-çурăк.

Пўртĕн ăшĕнче те тулашĕнчи пекех тирпейсĕрлĕх. Урайĕ хура. Сĕтелсем тахçанхи тусанран тасалса курман. Шпалерсем çурăлса пĕтнĕ.

Иалсовет председателĕ Даркин йулташ йалсовет канцеЉарине илемлĕ, куЉтурăлă тăвас пирки пĕре те тăрăшмасŤ.

И. Алтын-Баш.

Пулни-иртнисем

О ÇенŤаберĕн 10-мĕшĕнче Шĕмшеш йалĕнчи (Елĕк р.) В. Шингарĕв колхозник Выл-пасарĕнчен килне таврăннă. Выл-пасарĕнчен кăштах кайсан, Кивĕ Маŧакри усĕр çынсем: К. Титов, А. Йефимăв, Р. Йардыков тата ыт. хăваласа çитсе, Шингарĕвпа вăрçма тапратнă. Çав вăхăтра Титов алла тимĕр илсе Шингарĕва пуçран çапнă, вăл çавăнтах вилсе кайнă. К. Титова, А. Йефимăва тата Р. Йардыкова арĕсленĕ. Ĕçе пăхса тухма суда панă.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

ШУПАШКАРТИ ВЕНДИСПАНСЕРĂН
ÇĔРЛЕХИ ПРОФИЛАКТОРИЙĔ
(Поликлиникă килкартинче)
КАШНИ КАÇАХ
12 сехетрен пуçласа ирхине 6 сехетчен ĕçлет
4—3

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илме хаксем: пĕр уйăха 2 т. 50 пус, 3 уйăха 7 т. 50 п., 6 уйăха 15 т., çулталăка 30 тенкĕ. Хоçписĕнчен сыхăну уйрăмĕсем, письмоносецсем йышăнаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 492 Гор. Чăбоксари, типографи № 1 заказ № 711, ф. 6. 68×94 п. л.